Р В.

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАГА
Ҫ. Чебоксары Чувашской АССР
Абонем. ящ. № 25.

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАГА
Ҫ. Чебоксары Чувашской АССР
Абонем. ящ. № 25.

# ВĂЙ

ВИÇĔ ПАЙЛĂ
6 КАРТТИНЛĂ ТРАМĂ

Хакĕ 42 пус

Ђ Ă В А Ш
КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
Шупашкар 1931

АЛАКĔР ВАÇЛЕЙĔ

...ВАШ...КАЯ
К...ЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебо... Ч...ашской АССР
А... ...экз. № 25.

# В Ă Й

ВИÇĔ ПАЙЛĂ, 6 КАРТ-
ТИНЛĂ ТРАМĂ

...АЯ
...АЛАТА
г. Че... ...вашской АССР
А... ...экз. № 25.

К...
г. Чебо... ...АССР
А... ...25.

ЧУВАШ...
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебо... ...ской АССР
А... ...№ 25.

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРАМĔ
Шупашкар — 1931

Отпечатано в тип. № 1
Чувашгиза, г. Чебоксары
Заказ № 2070
Чувашлит № 584
Тираж 1.000 экз.

*10 ÇУЛ ТУЛТАРНĂ ТĂВАН КОМСОМОЛА ХАЛАЛАТĂП.*

*Авттӑр.*

## Выҫӑакансем.

1. **Кришкӑ**—22 ҫулхи комсомолёс, активис. Колхос правлени пуҫлӑхӗ.

2. **Ҫава**
3. **Ваҫҫа** } Кришкӑ тусӗсем. Комсомолӗссем. Колхос правлени ҫленӗсем. Иккӗшӗ те каҫҫӑ.

4. **Уҫӑп**—колхоҫнӗк-активис. 28 ҫулхискер.

5. **Ник. Ваҫ.**—трактӑр савӑтӗнҫе ӗҫлекен рапоҫҫи—комунис (*компет пуҫлӑхӗ пулнӑскер*). Кришкӑ пиҫҫӗшӗ, 27 ҫулта.

6. **Ваҫккӑ**—тӑлӑх ҫитӗннӗ патрак. Пйантсӑ (*пӑсӑлнӑскер*). Ырхан, 30 ҫулта.

7. **Ерхип**
8. **Ҫӗпиркка**
9. **Ҫилвестӑр** } йалти кулаксем (*ликвитатси хыҫҫӑн*), 45—50 ҫултискерсем.

10. **Крахйан**
11. **Кулине** } колхосри ватӑ карҫӑксем.

12. **Верук** — Ваҫҫа савни. Колхос хӗрӗ, 18 ҫулта.

13. **Анна** — комсомолккӑ. Колхос хӗрӗ, 17 ҫулта.

14. **Йӑкӑнат**
15. **2-мӗш стар.** } колхоса кӗнӗ ватӑ стариксем.

16. **Йамшӑк** — Ник. Ваҫ. стантсӑран леҫсе хӑваракан старик.

17. **Микуҫ** — комсомолёс. Аннана йуратакан каҫҫӑ.

18. **Петӗа**
19. **Ҫапук** } пионерсем.

20. **Комсомолёс.**

Милитси, ППУ акӗнҫӗ. Йут йалти хресҫенсем. Колхоҫнӗксем. Карҫӑксем, хӗрсем, комсомолӗссемпе пионерсем, аҫапӑҫасем т. ыт. те.

# І-МЁШ ПАЙЁ.

## 1-мёш карттин.

**Стсенă.** Ђухăн хресђен пўрђĕ. Алăкран кĕрсен сулахай йенђе кàмака. Тĕпел кукринђе кĕнеке-хаçатсем хумалли çўлĕк. Икĕ уçă тăракан ђўређе. Ђўређе виттĕр силленмесĕр тăракан сип-симĕс йăвăçсем курăнаççĕ. Çуллахи лăпкă, ăшă каç.

1.

**Кришкă** („*Молодая гвардия*" *кĕввине катаранах шăхăрса кĕрет те краççын çутать. Шăхăрма ђарăнмасăр çўлĕк çинђен кĕнеке илсе вулама ларать. Çав вăхăтра урамра урапа сасси, вĕрекен йытă сасси илтĕнсе шăпланаççĕ*). „Йалхуçалăхне талкăшпех ушкăнлатас ĕçе кулаксене класĕпех пĕтерес ĕçпе çирĕп çыхăнтарса туса пымалла. Ку ĕçе пĕтĕм патрак, ђухăнпа вăтам хресђенсене хутшăнтарса, клас çулйĕрне çирĕп тытса пырса тумалла" (*вулама ђарăнать*). Аван каланă... аван... ăнланмалла ђĕлхепе çырнă! Ерхипсен арманне, пĕтĕм пурлăхне туртса илсе, колхосăн валеçĕнмен фонтне хывни, калама çук аван ĕç, партти кăтартнине пурнăça кĕртсе пыни пулать. Çăмăл мар, вĕсемпе пирĕн хушăра нихăçан килĕшейми кĕрешў! Пĕлетĕп, йунăхаççĕ вĕсем, анђах, вĕсем йунăхнишĕн шикленсе тăрсан епĕр нумайах малалла кайас çук... ă-нга, (*пуçне ђиксе*) кĕрешў, кĕрешў... тĕппипе тымарне кăкласа пăрахиђђен кĕрешў!.. (*каллех вулать. Паусă. Хăй ăшĕнђе вуласан-вуласан анаслать*). А-ы-ы-х!.. çĕнĕ çĕнтерўсем патнелле—малалла. (*Вырăнне тирнейлет те, краççына сўнтерсе ђўређисене хупса выртать. Пĕр самантлăха шăп. Ђўређерен уйăх çутти кĕрет*).

г. Чебо… Абонем. отд. № 25.

Тепӗр ђӳређи усӑлаҭ те çамрӑкрах, çӗтӗк-çатӑк тумлӑ Вађккӑ шӑппӑн сиксе кӗрет. Ун кӗпи-йӗмӗ виттӗр çара ӳђӗсем курӑнаççӗ. Аллинђе вӑкӑр пусмалли йалтӑртатакан çӗçӗ. Куçӗсем çутӑлаççӗ. Ӳсӗр, тайкаланаҭ.

Çӗççине çутатса йерипен, пӗшкӗнсе Кришкӑ вырӑнӗ патне пыраҭ. Çитсе тӑрсан ђылайђђен Кришкӑ çине пӑхса тӑраҭ. Çӗççине хӑвӑрт çӳлелле çӗклет те, Кришкӑ кӑкри çине вӑрахӑн антараҭ, анђах сасартӑк ђарӑнса çӗççине айаккалла илсе, Кришкӑ çине пӑхса тӑраҭ. Унтан çӗççи çине пӑхаҭ. Сасартӑк çӗççине çӳлелле çӗклет. Çав самантра усӑ ђӳређе виттӗр Љава сиксе кӗрсе Вађкка аллинђен çулӑхаҭ. Вађккӑпа Љава тӗрмешеççӗ. Кришкӑ вӑранаҭ. Вађккӑ Љава аллинђен вӗçерӗнсе ђӳређерен сиксе кӗме хатӗрленнӗ Ваççана çӗçӗпе ђиксе тухса тараҭ, çӗççи выртса йулаҭ. Ваçça сасартӑк хытӑ, ђуна тивекен сасӑпа кӑшкӑрса йарса ђӳређе йанаххи çине пӗкӗ пек авӑнса выртаҭ.

**Љава** (*Ваççана пырса тытса*). Ваçça! Ваçça! Ы-ы-ы-х... вӗлерђӗç!... (*Ваçça урлӑ сиксе каçса Вађккӑ хыçӗнђен ђӳређерен тухса ђупаҭ*).

**Кришкӑ** (*сиксе тӑрса*). Тытӑр! тытӑр ӑна! (*Ваçça патне ђупса пырса суранне çыхаҭ*).

**Ваçça** (*вилеймен, йерипен тӑна кӗрсе*). А-ы-ы-х!.. (*тепӗр майлӑ çавӑрӑнса выртаҭ*). Ӑçта? Ӑçта епӗ...

**Кришкӑ.** Кунта, кунта, Ваçça, пирӗн патра...

**Ваçça** (*суйланаҭ*). Кри-ш-к-ӑ... сана, мана та вӗлер-ђ-ӗç вӗсем... а-а-ы-ы-х!... (*пуçне çӗклеме тӑрса ӳкет*).

**Кришкӑ.** Лӑплан, лӑплан, Ваçça, епӗ сывах, епӗ—Кришкӑ, сан йулташу!..

**Ваçça.** Кришкӑ, çук, Кришкӑ, епӗ вилмен... епӗ ђӗрӗ!... Ак, ак... илтрӗм, илтр-ӗм! Кӑкӑрӑмра ђӗ-рем тапаҭ... тап, ђӗрем!.. хытӑрах, хытӑрах тап!.. Çулӑмлан!.. (*Лӑпланса*). Вӑй пӗт-мен-ха (*тӑма хӑтланса*). Çук, епӗ вилмен... вилмен!.. Епӗ вӑ-йлӑ!.. Ех, тӑш-ман... а-а-а-ы-ы-х! (*ӳксе лӑпланса выртаҭ*).

**Кришкӑ.** Ваҫҫа, Ваҫҫа—епӗ вилмен, епӗ сан умӑнта тӑратӑп, епӗ, епӗ вӑл Ваҫҫа, епӗ—Кришкӑ!..

**Ваҫҫа** (*куҫӗсене уҫса пӑхса выртать, унтан сасартӑк*). Ан т-и-в-ӗ-р, ан ђарӑр мана!... тӑшмансене таварма вӑйхалӑм ҫук мар ман!.. Акӑ курӑр... (*ура ҫине хӗремесленсе тӑрать. Кришкӑ ӑна хӑрах хулӗнтђен ӳкесрен тытса тӑрать*). Епӗ... епӗ ђип-ђиперех ура ҫинђе тӑратӑп!... Ан тытӑр мана... Йарӑр... (*Алӑк патнелле тайкаланса утса кайать. Алӑкран тухас тђухне тђӗтренсе кукленсе анать*).

**Кришкӑ** (*Ваҫҫа патне тђупса пырса*). Ваҫҫа, Ваҫҫа!.. есӗ ура ҫинђе те тӑраймастӑн... Сана тӑшман амантнӑ... Айта, вырт хам вырӑн ҫине. (*Вырӑн ҫине ҫавӑтса пырса выртта-рать. Паусӑ. Ваҫҫа ҫине пуҫне тђиксе тђылайтђтђен пӑхса тӑрать*).

**Ваҫҫа** (*куҫне уҫать те, пӑхса вырт-сан-вырт-сан сасартӑк*). Кришкӑ! Есӗ, есӗ-и, Кришкӑ?... (*йеринен, хушӑран нӑйкӑш-каласа*). Вӑл сана вӗлерме килнӗ, Кришкӑ... Лђавапа епӗр хамӑр умри пӗренесем ҫинђе ђылай калаҫса ларсан, уйӑрӑлтӑмӑр. Нумай вӑхӑт иртмерӗ, Лђава ман пата ђупса пырса тӑратрӗ... Тухрӑм... Сирӗн ђӳређене пӗр мӗлке сиксе кӗни курӑнђӗ. Епӗр сывлама ђарӑнса сирӗн ђӳређесем патне ҫитеђђен ђупрӑмӑр. Лђава манран ма-ларах сиксе кӗђӗ. Епӗ сиксе кӗме хатӗрленнӗђђӗ... Кай-ран, кайран мӗн пулнине асту-м-ас-тӑп! (*сасартӑк: а-а-а-ы-ы-ых! ых! Ҫӳле ҫӗкленсе ҫӗлен пек авкаланса ӳкет. Кришкӑ нимӗн тума аптранипе ун тавра хыпӑнса кускалать*).

**Кришкӑ.** Ваҫҫа, Ваҫҫа, Ваҫҫа!... ы-ы-ых!... Пуҫланђӗ! Пуҫланђӗ!... Ак ӑҫта вӑл ђӑн-ђӑн ҫапӑҫу!... Тӑхта!.. ӑм-м-м-мм... Тӑхта, тӑхта, тӑхта!... Ҫапӑҫу-тӑк ҫапӑҫу!.. иккӗрен пӗри—есӗри, епӗри?! (*Ваҫҫа ҫине пӑхса*). Ваҫҫа, Ваҫҫа! (*Ваҫ-ҫа вилнӗ пек тђӗнмесӗр выртать*). В-и-л-ђ-ӗ... (*пуҫне тђиксе тӑрать, Ваҫҫа ҫине пӑхса алӑк патнелле хӑвӑрт утать. Алӑкран тухас тђухне сасартӑк тђарӑнса пуҫне тђиксе*

*шухăшласа тăрат. Унтан пуçне йалт çĕклесе илет те тухса кайат*).

3.

**Ваççа** (*мĕшĕлтетсе йерипен куçне уçат те сасартăк-кăшкăрса йарса çĕре персе анат. Пĕр самант нимĕн тап ранмасăр выртат. Унтан йерипен алăк патнелле шăват. Алăк патне çитерехпе кĕлеткине çĕклентерсе авăнса ўкет. Урамра шавланă сасăсем илтĕнеççĕ. Сасăсем Кришкăсен пўртъĕ патнелле çывхарса пыраççĕ. Кришкă кĕрет, ун хыçĕнтъен халăх. Ваттисем, çамрăккисем*).

**Кришкă** (*Ваççа умне тъаранса тăрса*). Акă, курăр ĕнтĕ халăх, курăр пирĕн тăшмансен, клас тăшманĕсен ирсĕр киревсĕр ĕçне! Çавнашкал ĕнтĕ вĕсен ырă ĕçĕ... (*Пурте Ваççа тавра капăрланса тăраççĕ*).

**I-мĕш хр.** Шел... Калама çук кăмăллăђђĕ... Никама нихçан сивĕ сăмах каламан... Темĕнле хуйăх пулсан та, Ваççапа калаççан хуйхă пусăрăнађђĕ... Мĕншĕн?. Кам алли тунăши ку ĕçе?

**2-мĕш хр.** Çамрăк, вăй-питти... пурăнмаллађђĕ сан, Ваççа, пурăнмаллађђĕ...

**Крахйан.** Етем марах ĕнтĕ вăл, у-й етем марах... камши, кам вĕлерђĕши?..

**Кришкă.** Пирĕн ĕретри хастарлă ĕçлекен йулташсенђен пĕриђђĕ вăл... Çывăр, Ваççа... Епĕр сан ĕçна малалла тăсăпăр.

**1-мĕш хр.** Вăл йаланах пирĕн пурнăçа йусасшăн тăрăшађђĕ...

**2-мĕш хр.** Ђăнахах та хăй çинђен шухăшламасђђĕ...

**Крахйан.** Ах, мĕскĕн, мĕскĕн çамрăк пуçĕ... Мĕншĕн?.. Кам сана (*йĕрет*).

**Кришкă.** Çак çамрăк, хастарлă ĕçлекен йулташăн сивĕннĕ кĕлетки сирĕн умра. Клас тăшманĕ вăл çамрăк иккенне уйамарĕ. Вăл хăйĕн йулашки тапхăрне пурăнса иртер-

нĕ вăхăтра нимĕн умĕнђе те ђарăнса тăмасť. Ваççа пĕрремĕш вилĕ мар, Совет Сойусĕнђе клас тăшманĕсен алли пирĕн ĕретрен ђи хастарлă йулташсене кăларса пăрахса ĕçхалăхĕн вулккан пек вĕресе тăракан вăйне ђакарасшăн тăрăшаť!.. Пирĕн вăй пĕтĕм тĕнђери ĕçхалăхĕн ĕçпе пиçнĕ мосоллĕ алли. Ăна нийепле вăй та пусараймĕ!.. Кашни виле вырăнне епĕр хамăр ĕрете çĕнĕрен те çĕнĕ, сотсиалисăмшăн кĕрешекен вăйсене кăларса тăратăпăр... Пирĕн вăй, нихăçан ђакми вăй... Пирĕн вăй клас тăшманне кăкласа, хамăр пурнăçа лайăхлатас ĕçре... (*Ваççа çине кăтартса*). Акă курăр ăна, вăл ашшĕ-амăшсĕр, тăлăх, кĕтӳ патĕнђе çӳресе, пурнăçпа кĕрешсе çитĕнђĕ. Ваççа, Ваççа... ыйхупа... Есĕ ђаплă вилĕмпе вилтĕн. Есĕ вилнĕ пулин те епĕр! Пирĕн умра тата тăвăллă кĕрешӳ пуррине курсах тăратпăр (*пуçне ђиксе тăрať*).

**Комс.** Колхос клупне куçарса выртарас ăна. Клуп тăвасшăн иртнĕ çултанпах тăрăшрĕ вăл.

**Кришкă.** Айтăр, хамăр алăсем çине хурса çĕклесе кайар. (*Пурте Ваççана маларах çĕклесшĕн тăрăшаççĕ. Çĕклеççĕ те пытару маршне çăварсене хупса сăмсапа кĕвĕлесе тухса кайаççĕ. Пӳртре никам та çук. Ђылайран Кришкă тата тепĕр комсомолĕç кĕреççĕ*).

4.

**Кришкă** (*стсенă варрине çитсе тăрса*). Ăсатрăмăр... ыран колхос уйа тухмасť. Пурте... Пурте Ваççана ăсатма.

**Комсом.** Йĕр тĕппипех сӳрĕлсе çитеймен ђухне, пирĕн хăвăртрах тăшмана шырама пикенмелле... Хамăр йалсемех пулсан, инçе тарса пытанаймĕ. Ĕçхалăхĕн тивĕçлĕ саккунĕ аллине лексен, кăтартĕçĕ сана!.. Хаљ катаран пуçне ниçта та тарса пытанас çук.

**Кришкă.** Алла лекнĕскере вĕçертсе тартрăмăр. Ђава хыçалтанах тухса сикрĕ. Вăл килмесĕр епĕр пурпĕрех нимĕн те тăвайрас çук. Таçта, такăш йенелле тарнă вăл. Лекесси пурпĕрех лекеттеха вăл.

**Комсом.** Милитсине кайса пĕлтерес.

**Кришкă.** Милитси?.. Пирĕн ку ĕçре хамăрăн милитси пулмалла! Анђах пĕлтерессине пĕлтересех пулат. Хамăр пулăшмасан милитси нимех те тăваймĕ. Вĕсене çул уçса памалла, вара... (*хăй тĕллĕн*) хуйхăрас мар тетĕп, анђах ђăтма хĕн... Ђи çывăх, хамăрпа пĕрле ĕçлекен йулташђĕ вăл. Вăл та пирĕнпе пĕрлех, малалла пурнасшăн ĕçлетђĕ. Колхос орканисатсилесе Ерхипсен пурлăхне туртса илнĕ ђухне темиçе çĕр вăл та пирĕнпе пĕрле — çывăрман. Шел, шел сана, йулташăм, анђах, пĕрре пулса иртнĕ йапалана, иртнĕ кун пекех тавăрма çук... (*Пуçне ђиксе тăрат, унтан сасартăк*). Верук! Верук пĕлсен мĕн тейĕ? Йепле... вĕсем пĕр-пĕрне йуратађђĕç (*уткаласа çӳрет*).

**Комсом.** Çитĕ, Кришкă, ђăнахах та хĕн ĕнтĕ... анђах хуйхăрнипе мĕн тăвăн? Ваççана епĕ хам та тăван пиђђене шелленĕ пекех (*çав вăхăтра ђӳретђе умĕнђен питĕ хăвăрт ђупса иртсе кайни курăнат. Унта-кунта йытă сассисем*).

**Комсом** (*хыпăнса*). Кришкă!.. çавсенђен пĕри марши вăл?!..

**Кришкă.** Айтăр хăвăртрах!.. ы-ы-ы-х!.. (*пурте васкаса хăвăрт ђупса тухса кайаççĕ. Вĕсем ђӳретђе умĕнђе ђупса иртсе кайни курăнат. Кăшт тăрсан урапа сасси пӳрт умне çитсе ђарăнат. Никколай Ваççилђђă, ун хыçĕнђен йамшăк ђăматансем çĕклесе кĕреççĕ*).

5.

**Ник. Ваç.** (*пӳртре никам çуккине кура таврăлла пăхкалат*). Тăван çĕршыв, тăван килçуртăм, сыви ес? Хăçантанпа курман сана, хăçантанпа... (*уткаласа*). Кăмака... ђӳређи-

сем, тенкел, пурте, пурте харпăрхăй ырăнђех... Тĕтĕмпе мăкăрланан хурçă саслă савăтсем хыççăн кунта лăпкă, аван... Кашни утăм, кашни ађаран палланă йапаласем иртнĕ кунсене аса илтереççĕ. Астăватăпçке, астăватăп... Ак çак сĕтел хушшинђе компет кăнђелерĕ. Çӳлĕксем çинђе хутсем... Епĕ, хутла нађар пĕлекенскер, саспаллисене кукăрткаласа лараттăм. Тăхăр çулхи шăллăм Кришкă, йаланах револђутси, полђшевиксем çинђен ыйтса ăнран йарађђĕ, епĕ хам пĕлнĕ пек ăнлантаркаласа параттăм. Унтан вара краштăн вăрçи, ыçлăх мана çак пӳртрен таçта, айакка илсе тухса кайрĕç... Унтанпа килмен... курман сана, çуралнă пӳртĕм...

**Йамшăк.** Никколай Ваççилђђă, Канаш стантсинђен миçе сехет хушши килтĕмĕр, пăхха?

**Ник. Ваç.** А-а-а! Епĕ астуман та, есĕ мĕн алăк патĕнђе тăратăн, иртсе лар. (*Сехетне кăларса пăхса*), Утмăл çухрăм... 7 сехет çурă килнĕ.

**Йамшăк.** Аптрамалла мар, ниђђава килнĕ вара.

**Ник. Ваç.** Есĕ лашуна килкартне кӳртрĕни?

**Йамшăк.** Сывлатăрха пăртак.

**Ник. Ваç.** Кӳртсе тăвар есĕ, тăварсан авантарах пулĕ.

**Йамшăк.** Йурĕ еппин, тăварса кĕремха (*тухса кайат*).

**Ник. Ваç.** Тул çутăласси инçе йулман, ăçта кайса пĕтнĕ вара килтисем, ни анне, ни Кришкă (*анаслат*). Вакун çинђе пĕр каç куç хупман... Епĕ кунта лăпкă ырăнта. Хулара халиђђен те пурнăç хуранти пек вĕресе тăрат пулас. Ђунтанах йуратнă трактăр савăђĕ, çывăх йулташсем йăвăр ĕç хыççăн канаççĕ пулмалла. Епĕ хама çуратса, ĕмĕртсе ӳстернĕ йалта иртнĕ кунсене аса илетĕп. Нумай хĕнхур курнăçке епĕ çакăнта... (*тђӳретђерен пăхса*). Еп лартса, хам лартса хăварнă йăвăççем йепле çитĕнсе кайнă, кармашса çитеймĕн (*савăнат. Пăртак тăрсан йамшăк кĕрет*).

6.

**Йамшăк.** Ну, хаљ ёнтĕ выртса çывăрсан та йураŤ пулмалла, тирпейлерĕм. Пĕр-икĕ сехетрен шăварса сĕлĕ парăпăр.

**Ник. Ваç.** Çывăрађђен кăшт çырткаласан йураŤ пулмалла. Ман ђăматанра хула йулашкисем пурђђĕ (*ђăматанран ђейник, шурă çăкăр, кăлпасси кăларса, сĕтел çине хут сарса хурат. Аллисене çуса сĕтел хушшине кĕрсе ларaççĕ*). Ђухăн пурăнатпăр епĕр, Лукка пиђђе... Çынсем пек пурăнма вĕренеймен... мĕн тăвас тен, пур пеккипе çитĕ. Хуçалăха колхоса кўртсе хăварсан, ушкăнпа ĕçлесе ђип-ђиперех пурăнма пуçлĕçха. Хамăр савăтпа шефа илсен, трактăр йарса парăпăр. Йал пĕрре хурçă ут çине утлансан аптрамасŤ вара, унпа кирек мĕн ĕç тума та пулаŤ (*анат çийеççĕ*).

**Йамшăк.** Трахтăр, трахтăр теттĕр есĕр, çак трахтăра нийепле те курса пулмарĕ ёнтĕ. Неушлĕ лашасăрах суха тума пулаŤ?.. Тĕлĕнмелле.

**Ник. Ваç.** Суха тума çеç мар, Лукка пиђђе, трактăрпа шыв кўме, вутă турттарма, тырă акма, утă çулма, авăн çапма, кĕлте çыхма, тата темпĕр тума та пулаŤ. Трактăр вăл, Лукка пиђђе, ушкăнлă хуçалăхра ђи кирлĕ машшин, унпалан ĕçлеме çын та нумай кирлĕ мар.

**Йамшăк.** Еккей хăйамат, çынсем темтепĕр шухăшласа кăларĕç кăђухне, епĕр ĕлĕк сухапуçпе шăйăрттарсах çăкăр çинĕ. Колхос, ертел, йулташлăхсем, мĕн-мĕн çукши?..

**Ник. Ваç.** Çавсем пĕтĕмпех йалхуçалăхне вăйлатса çĕнĕ çулпа йамалли мелсем. Лукка пиђђе, хăвах шухăшласа пăхха, çакăн çинђен. Ђухăн хуçалăхăн лаши йе сухи пулмасан, вăл кунран кун вăйсăрлансах пыраŤ, çав ђухăнсемех ушкăна пĕтĕçсен вăйлăланма пултараççĕ.

**Йамшăк.** Вăл ђăнахах ёнтĕ, анђах çынсем пĕр-пĕринпе нийепле те килĕшсе пурăнма пултараймĕç. Кашни

ҫынӑн харпӑрхӑй кӗпи, харпӑрхӑй ӳҕӗ ҫумнерех ҫыпҫӑнса тӑратҫке. Ман лайӑхрах пурӑнас килет, теприне пырӗ, пӗри—ӗҫҕен, тепри—кахал. Етем тени—шуйттан вӑл, Ник. Ваҫҫилҕҕӑ (*сӗтел хушшинҭен тухатӗ те Ник. Ваҫҫилҭҭӑпа иккӗш те ҭӗлӗм тивретсе йараҫҫӗ*).

**Ник. Ваҫ.** Вӑл пӗтӗмпех хамӑр тӗттӗмлӗх пирки, Лукка пиҕҙе. Епӗ хам та малтанах ҫавнашкал шухӑшланӑ. Акӑ пирӗн трактӑр савӑтнех илер, унта 20.000 ҫын ытла ӗҫлет, вӗсем пурте пӗр ҫемйери ҫын пек пурӑнаҫҫӗ. Пӗр шухӑшлӑ вӗсем (*ҫав самантра, урамра ҫамрӑк ҫын сассисем илтӗнеҫҫӗ. Кришкӑ тата икӗ комсомолӗс кӗреҫҫӗ*).

7.

**Кришкӑ** (*алӑкран кӗрсенех Ник. Ваҫ. ҫине пӑхса тӑратӗ, унтан сасартӑк ҭупса пырса пиҭҭӗшне ал тытса*). Пиҕҕе!.. Микуҫ пиҕҕе!!!

*Ҕаршав.*

# 1-мӗш пайӗ.

## 2-мӗш карттин.

**Стсенӑ**. Йал ҫумӗнҕи ката (вӗтлӗх вӑрман). Уҫланкӑри йӑвӑҫсен сӑнне уйӑх ҫути илемлетет. Инҫетре сӑртсем курӑнаҫҫӗ, хӑрах айаккинҕе йал. Таҫта айакра хӑнкӑрма сассисем илтӗнеҫҫӗ. Выртмари аҕасен йуррисем те.

1.

(*Ваӈккӑ хытӑ ҭупса пырса пӗр йӑвӑҫ тӗми хыҫне ҭӑматӗ. Хыҫалта ҫуйӑхнӑ сасӑсем илтӗнеҫҫӗ*).

2.

(*Ҕава хытӑ ҭупса тухса, уҫланкӑ варӗнҭе сасартӑк ҭарӑнса тӑрса итлет. Инҫетре Уҫӑп сасси*). Ҕ-а-а-в-а-а!...

**Ҕава** (*хыттӑн*). А-а-у-у-у!.. (*кӑшкӑрнӑ сасӑсем ҫывхарса пыраҫҫӗ. Ҕава хушӑран сасӑ парса тӑратӗ*).

3.

*(Виççĕн хашкаса ђупса кĕреççĕ. Уçăп малта, ун хыçĕнђ вăтам çулхи патмар çынсем).*

**Ђава.** Çакăнта çитеђђен хыçалтанах хуса çитсе пыраттăм. Таçта, пађах çухалђĕ есрелĕ!...

**Уçăп.** Тавай вăрманĕпех ухтаратпăр! Пурпĕр тупатпăр...

**2-мĕш хр.** Айтăр!... саланăр!...

**1-мĕш хр.** Айтăр, айтăр!...

**Ђава.** Мĕн пулаť килет, айтăр еппин, шыраса пăхар *(пурте саланса кайаççĕ. Пĕр-пĕрине сас параççĕ. Вĕсен сассисем инçетрен инçете кайса кăшт çеç илтĕнекен пулаççĕ. Çав вăхăтра выртмари ађасен сассисем шăпланаççĕ).*

4

**Вађккă** *(йăвăç тĕми кутĕнђен тухса тарма тăрат. Сасартăк ђарăнса уçланкă варрине пырса тăрат, пуçне икĕ аллипе йарса тытса).* Ы-ы-ых! Мĕн хăтланатăп епĕ?!..Мĕн тăвас теттĕр есĕр мана?!... Тытăр мана тытăр!.. ак епĕ кунта, сирĕн аллуна ирĕкĕнех парăнма хатĕр!... ай халиђђен курман есĕр мана?... Епĕ вăл, епĕ çĕтĕк-çатăк Вађккă... Хăйĕн ĕмĕрĕнђе пĕр кун ĕçмесĕр иртмен ун. Çук, çук Ванккă нихăçан та распой пулман, Вађккă нихăçан та вăрламан, Вађккă... кам пĕлет... вĕлерес те çукђĕ пуљ... *(паусă).* Ерхип, ы-ы-ых, Ерхип!.. Халиђђен пуйан, тур шутлă çынсем шутĕнђе тăтăн пулин те, манашкал çаралса йулсанах çын çиие аллуна çĕклерĕн. Ĕмĕр манашкал çĕтĕк-çатăк пулнă пулсан... есĕ йалта пĕр çынна та шеллесе хăварман пулăттăн... Çитменне мана, мана çĕтĕк-çатăк ĕçме йуратакан Вађккăна ерехпе илĕртсе çын вĕлерме илсе карăн, ăна та ахаљ ĕçтересшĕн мар есĕ!.. Тăхта! *(шавлакан сасăсем çывхарса пынине илтсен, кайлă майлă çаврăнкаласа пăхат те, тухса тарат. Уçланкăна Ђава, Уçăп тата Уçăп йулташĕсем пырса кĕреççĕ).*

5.

**Ђава.** Пăхатăп епĕ, Кришкăсен ђўређи умĕнђе пĕр тайкаланакан мĕлке йерипен йăпшăнса кармашса пăхатъ... ун патнелле çывхартăм. Пăхатăп, кăсйинђен вăрăм çĕçĕ пек çуталакан йапала кăларђĕ. Çавна курсанах Ваççа патне ђупса, ăна ђĕнсе тухрăм. Пыратпăр иккĕн... хайхи мĕлке Кришкăсен ђўређине ђăмрĕ. Епĕр ђўређе умне йăпшăнса çитсе тăтăмăр. Пăхатпăр...

**Уçăп.** Ну вара?...

**2-мĕш.** Вара мĕн?

**1-мĕш.** Ан пўлха, Çтаппан!...

**Ђава.** Вара?... çав ĕмĕлке çап-çутă çĕççине çутатса Кришкă патне пыратъ.

**Уçăп.** Неушлĕ паллаймарăн?...

**Ђава.** Тăхтаха, ман шăмшак сăркăлтатса ђĕтресе карĕ. Унђђен те пулмарĕ, епĕ хамахам пĕлмесĕр ђўређерен сиксе кĕрсе, Кришкăна пусма хатĕрленнĕ çĕçĕллĕ алла йарса тытрăм.

**1-мĕш.** Вăт шуйттан!...

**Ђава.** Пуçларăмăр тĕрмешме... Кам пĕлет. тепле вăл ман алăран вĕçерĕнђĕ те, тўрех ђўређерен кĕме хатĕрленнĕ Ваççана...

**Уçăп** (*хыпăнса*). Мĕн, мĕн Ваççана?!...

**Ђава.** Ваççана çĕçĕпе ђиксе... тухса сикрĕ... (*Ваççа ђўређе çинђе пĕкĕ пек авăнса хĕпхĕрлĕ йун йухтарса выртатъ*).

**Уçăп** (*пуçне ђиксе*). Е-с-р-е-л-л-ĕ!... Вилђĕ-и?...

**Ђава.** Пĕлмес-тĕп... Епĕ кунта ђупса тухнă вара.

**1-мĕш хр.** Неушлĕ палламарăн?...

**2-мĕш.** Кам, камши?!...

**Ђава.** Паллама?... Ун сăнсăпатне пăхма вăхăт пулман пирĕн... Паллаймарăмăр....

**Уçăп.** Кришкăна вĕлерме пынăскер пулсан, паллах

ёнтĕ, иртнĕ çулта çаралса йулнă кулаксенђен пĕри. Вĕсем хăйсен ăшĕнђе çулталăк хушшинђе тăвăнса çитнĕ çиллине ниçта шăнăçтарайман. Ку таранђђен нимĕн те палăртмарĕç вĕсем. Халĕ ак курăр!... Кришкăна мĕншĕн вĕлерес?... Ун пурлăхĕ пури, кил çурђĕи? Хăт те мĕн калăр есĕр мана, çавсенђен пĕри.

**Лђава.** Уçăп, есĕ тĕрĕс те калатăн пулмалла. Антăх манпа çапăçаканни ӳсĕр Вађкка лађах, çĕтĕк-татăк.

**1-мĕш хр.** Тумтире улăштарса тăхăнасси йăвăр ĕмех мар вăл.

**2-мĕш.** Кулаксем те ытла йаках тумланмаççĕçке...

**Лђава.** Нумай калаçса тăмасăр, айтăр хăвăртрах Кришкăсем патне! Ах, Ваççа, Ваççа мĕнлеши? (*тухса каяççĕ. Кăшт тăрсан, Ерхип уçланкăн тепĕр йентђен сиксе тухса ларакан тункатаран такăнса уткăнса кайат*).

6.

**Ерхип** (*ура çине тăрса хашт сывласа илет те çамкине кĕпе аркипе шăлса типĕтет*). А-а-ых, шăпăрлансем!.. Хăвăр шухăшпалан Ерхип пурлăхне туртса илсе пĕтертĕмĕр терĕр пуль?!. Çук, Ерхип пĕтменха вăл, Ерхип пурăнать!.. Акă ман ђăмăрсем!... Ку ђăмăрсемпе сире парăнас çукха епĕр... ы-ы-ых!.. Пĕрерĕн-пĕрерĕн тытса păва-пăва вĕлерсе пĕтерĕттĕм сире... Тăхтăр!... пирĕн урамра та праçнĕк çитĕ... Акăлђансем килсен кăтартăпăр сире!... Кĕлмĕçсенђен пуçлăх пулни нумайа пымĕ. Вађккăна хăвалаттăр... асту, Вађккă ухмах! ха-ха-ха-ха!... (*айакра, йăвăç тĕмисем хушшинђен йĕнĕ сас çывхарса пыни илтĕнет. Верук пуçне тђиксе йерипен йĕрсе кĕрет. Ерхип пытанать*).

7.

**Верук** (*çемçе сассипе*). Мĕн мĕне пĕлтеретши?.. Çук... çук, нийепле те ĕненес килмест. Ваççа, Ваççа, есĕ нимĕн

те пĕлместĕн, есĕ вăранми, лăпкă ыйăхра... Ђава пырса кăшкăрсанах епĕ ђăтаймарăм. Куççуђ пĕрђисем хăйсене хăйсемех йухса анаççĕ. Ниçта ăша пусарма çук. Нимĕн тума аптранипе кунта тухса сĕмленсе çӳретĕп. Ваççа, Ваççа, ах пĕлесђĕ сан... Никам та çук... Йăвăç тĕмисем, çап çутă уйăх çеç итлеççĕ мана... кам туртса илђĕши, кам? (*ĕсĕклесе йĕрет те йерипен йал йенелле утать. Ерхип вăл тухса кайса шăплансанах сиксе тухать*).

8.

**Ерхип** (*ахăлтатса кулать*). Ех, ђăх ђĕри!... Тупнă камшăн хуйхăрмаллине (*кулать. Сасартăк улшăнса*). Вăхăтлă ха сирĕн ĕçӳсем ăнса пыраççĕ пулсан, йалти ђухăнсем сирĕн майлă çавăрăнса, сирĕнпе пĕрле ĕçлеççĕ пулсан, кайран йĕрĕç, анђах епĕр, епĕр унђухне сирĕнпе мĕн тумаллине пĕлĕпĕр!... Ну, Ерхип, çанталăк лăпланђĕ, уттаратпăр (*тухса кайать. Ханкăрма сассисем çывăхрах. Атђасен йурланă, ахăрнă сассисем çывхарса килеççĕ. Кăшт тăрсан, пĕр ушкăн атђасем, катђђăсем, хĕрсем йĕвенсем, аçамсем çĕклесе купăс кĕввипе йурласа кĕреççĕ*).

9.

**Петĭа.** Атђасем!.. кун-т-а-а-а!!! (*инçетре хирĕç сасă параççĕ*).

**Çапук.** Атђасем! кун-т-а-а!!! (*Петĭана витлесе кăшкăрать*). Курак ђĕппи лађах кăшкăран ес, Петĭа!...

**Петĭа.** Йаланах мăшкăлатăн ес, Çапук, тек-тек вăл йăлана пăрахмалла ĕнтĕ.

**Çапук.** Есех пит пĕлетĕнçке, сансăр пуçне пĕлмеççĕ пуђ, асту!...

**Йăкăнат.** Пуçларĕç ĕнтĕ ђăкăлташма, ех, алтан çӳрисем! (*Хăйне хăй*). Тул çутăлађђен тек-тек куçмасан та йурăĭ ĕнтĕ (*çав вăхăтра ыттисем аçамсене сараççĕ, вырăнсене тирпейлеççĕ*).

**Çапук.** Аҫасем, айтăр туратсем пухса килсе ҫёртсе йаратпăр.

**Петта.** Айукка, каймастăп...

**Аҫасем.** Айтăр, айтăр!.. полнăй мăкăрлантаратпăр пёре. (*Петтана*). Айта, мён нишленсе тăратăн?!

**Петта.** Йурĕҫке еппин... (*ахăлтатса кулса, ҫуйăхса саланаҫҫĕ аҫасем. Сассисем унта-кунта илтĕнкелеҫҫĕ*).

**Йăкăнат.** Ех, ҫамрăклăх... ҫамрăклăх! Пăхатăп та епĕ, тĕлĕнетĕп кăҫухнехи ҫамрăксенҫен, вăйăра 7—8 ҫулхи аҫасем пек ҫăмăл ĕҫре, тепĕр ваттинҫен иртереҫҫĕ вара. Епĕр ҫухне вăрҫу, ҫапăҫусăр каҫ иртместҫĕ. Шанкă пуҫтарма шăркаҫҫăсем пурҫҫĕ... хаҫ ак пăх та кур, каҫҫи, хĕрĕ, аҫипăҫи веҫех пĕрле.

**2-мĕш ст.** Самани те урăх ҫав, Йăкăнат, ҫав майпа ҫамрăксем, хамăр та улшăнса пыратпăр. Ара, ват пуҫпах колхоса кĕрсе карăмăр та ĕнтĕ... ҫамрăксем кирек мĕн каласан та пирĕнтен ăслăрах ҫитĕнеҫҫĕ. Ваҫили Кришкине курха, вăл ĕҫ йĕркине те аван пĕлет, ҫамрăк ҫын тесе пырса ҫыпҫăнха ун патне, кăтартĕ вăл ҫамрăк... колхос пуҫлăхĕ, шуткă мар вĕт вăл ĕҫе туса йарасси.

**Йăкăнат.** Пĕр кил мар ҫав, 63 кил. Кашнинех йурамалла каласа тăнлантармалла. Нў, ĕҫлессине те ҫĕр ҫывăрмасăр ĕҫлеҫҫĕ ĕнтĕ. Ун пек ҫухне епĕр хуҫалăх ҫинҫен шухăшламан. Хам Љаванах илсе пăхатăп епĕ... пĕрмайах колхос, ĕҫсене мĕнле тусан лайăхрах пуласси ҫинҫен калаҫать. Тĕлĕкре те ҫавăнпах супăљтетсе выртать. Ҫамрăк пек мар, кăшт та ĕҫсĕр ларасшăн мар, какки вăхăт пулсанах кĕнеке-хаҫат, аптрамалла.

**2-мĕш ст.** Ĕҫĕ аван ĕҫех пуљтеха вăл. Пĕр кун Ваҫҫа „Волонттор" комун ҫинҫен кĕнеке вуланине тăнласа лартăм... Малтан вĕсем те ытла аванах пурăнман, хаҫ аван пурăнаҫҫĕ тет вĕсем... тырпул, выҫăх-ҫĕрлĕхĕ т. ыт. калама ҫук аван тет. Пирĕн, ухмахсен, те ăслă ҫынсем

каланине итлесех пулаť. Ахаљ вёренмен пуљ вёсем... ђăкăлташса тăма йурататпăрçке епёр...

**Йăкăнат.** Тёлёнмелле... Епё хаŭ ват пуçпа, уйа тухсан кахалланакансене мёнле ĕçлеттерессипе аптранă. Кришкă ун çинђен тавнах шухăшласа кăларнă иккен... Çамрăк те ăна... Уйа тухакансене ушкăнăн-ушкăнăн уйăрас, кашни ушкăн мёнле ĕçленинине сăнама ушкăнсем хăйсем хушшинђен пёрер çын суйлађђăр, тесе лаплаттарса хуђё. Епё çăвара карса кăна тăрса йултăм...

**2-мёш ст.** Тақтан ăс çитет вёсен... Ак ёнтё, ĕçе лайăхрах туса пыракансене преми те параççё. Тата леш ĕç тунине сăнаканё те çивёђ куçлă шеђмă... Кам ĕçлейменнине виттёр кураť. Кайран ĕç укçи илнё ђухне кахалăн ёнсине хыç та тăр...

**Йăкăнат.** Каккуй кахалланма унта. Ирёксёрех йăрăланăн... Ну Кришкă та Кришкă... (*Аţапăтђасем, катђтђă, хёрсем çуйăхса пыраççё. Кашни унтан та кунтан хăрăк туратсем çёкле-çёкле кёрсе куналаççё*).

10.

**Çапук.** Йăкăнат муђи, сан шăрпăк пулаканђђё.

**Йăкăнат.** Парас, парас (*кăларса парса тђёлёмне тултарма тытăнаť. Аţасем пёр-пёрине калаçаççё, выђаççё. Çапук кăваť тђёртсе йараť. Аллисене ăшăтаť. Унтан кёçех кăваť тавралла пухăнса лараççё*).

**Ађасенђен пёри.** Айтăр вăйăсем выђатпăр!..

**Сасăсем.** Мёнле, мёнле выђатпăр? Айтăр ыйтусем ыйтмалла.

**Ађасем.** Айтăр, еппин айтăр!. (*Кăваť кутёнђен сиксе тăрса, ваттисемсёр пуçне пурте сăнтђăрла тытăнса* (**карталанса**) *ункă тăваççё. Ункă варринче Петта „Çёмёрт çеçки çурăлаť" йурласа çаврăнсан, Çапукă тђёнсе илет*).

**Петта.** Каласа парха, колхос ĕçне кам тёртсе пыраť?

Кн... АССР

**Çапук.** Кришкă (*пурте ахăлтатса кулаççĕ, Петĕтя тепĕр хĕре тъĕнет*).

**Хĕр.** Колхос ĕçнеи? Совет, правлени тата ревиçи комиç çийĕ. (*Карта варне йулат, малалла йурласа çаврăнаççĕ. Пĕр катътăна тъĕнет*). Правлени кама пăхăнса тăрать?

**Микуç.** Колхос ђленĕсемпе упполномођђĕннăйсен пуххине. (*Ал çупаççĕ, ункă варне Микуç йулат. Йурласа çаврăнаççĕ. Микуç пĕр хĕрне тъĕнет*). Каласа парха, йăвăр çын пулсан хĕрарăмсене колхосра çаплах ĕçлеттереççĕи?

**Анна** (*пурте кулса тъарăнсан*). Çуратађђен пĕр уйăх, çуратсан тепĕр уйăх кантараççĕ (*кулса ал çупаççĕ. Анна ункă варринтъе йурласа çаврăнсан Çапука тъĕнет*). Ўсĕр çынсене колхосра ĕçлеттереççĕи?

**Çапук.** Ĕçлеттермесĕр ара, пирĕн атте нихăçан та ĕçмесĕр ĕçлемест (*пурте ахăлтатса кулаççĕ. Анна хăйĕн йулташне тъĕнет. Урăх йурă йурласа çаврăнаççĕ*).

**2-мĕш хр.** Ўсĕр çынна колхосра ĕçлеттермеççĕ, вăл ĕçре сийен кўнисĕр пуçне нимĕн усă та параймасть (*ал çупаççĕ, 2 хĕр урăх катътăна тъĕнет*). Прикатирсем тесе камсене калаççĕ?

**Микуç** (*хĕрелсе*). Пĕлместĕп (*кулаççĕ. Петĕтяна тъĕнет*).

**Петĕтя.** Илтесси илтнĕ те пĕлместĕп (*Аннана тъĕнет*).

**Анна.** Прикатирсем тесе ĕçе примерлă туса пыракан ушкăнра ĕçлекенсене калаççĕ. Вĕсем колхосра мĕнле ĕçлемеллине кăтартаççĕ, хăйсем те тăрăшса ĕçлеççĕ.

**Ађасем.** Маттур, маттур Анна!

**Микуç.** Çитет, ађасем, айтăр кимнаçтĕк тумалла выљатпăр.

**Сасăсем.** Айтăр, ђăнах та, айтăр... Микуç, есĕ аван пĕлетĕн, пуçла.

**Микуç.** Тăрăр еппин çĕркаçхи пек (*атъасем сăхманĕсене хуса утса пурте харпăрхăй вырăнне кайса тăраççĕ. Шăп*). Раз, два, три, четыре! (*тата малалла та атъасем пĕр выç-*

*тăват тĕрлĕ кимнаçтĕк вăййи тунă хыççăн купăсçă марш кĕввине калать. Ушкăн ĕретленсе йăвăç тĕмисем хушшине кĕрсе çухалать).* Саланăр!.. (*пурте уçланкăри кăвать патне ђупсапырса карталанса лараççĕ. Кăвак çут килни палăрать*).

**Микуç** (*старик патне пырса*). Йăкăнат муђи, есĕ çав Йаппун вăрçи çинђен мĕн те пулин каласа кăтартха, интереснă калатăн ес!

**Йăкăнат.** Мĕн интересĕ пултăр унта, кивелђĕç пуљ ĕнтĕ ман йумахсем?

**Ађасем.** Калаха ĕнтĕ, кала, Йăкăнат муђи!..

**Йăкăнат.** Итлесех теттĕр пулсан калам еппин (*ађасем ун çывăхнерех куçса ларассĕ*). Мĕн салтак майĕ пулнă епĕр... Выђăх пек илсе кайса йанă пире — вăрçнă. Камшăн, мĕншĕн вăрçнине пĕлмен. Астăватăп пĕрре: пирĕн свотра стутентсă пурђђĕ, иккĕн-виççĕн пĕр-пĕр кĕтессе пухăнса ларсан вăл, пуйансем, йанăрал, патша ĕçлекенсемпе пирĕн пек хресђенсене пусмăрлани çинђен каласа ăнлантарађђĕ. Епĕр вара, хамăр пурнăçа ун сăмаххисемпе танаштарса пăхсан, вăл ђăн каланă иккенне те уйăрса илеттĕмĕр. Аван, кăмăллă çынђђĕ вăл. Ђăнлăхшăн кирек хăçан та вилме хатĕрђђĕ. Пĕрре охвитсер мана нимĕн айăпсăрах хĕненине курсан вăл ђăтаймасăр, охвитсере тўрех пырса çулăхса хĕнеме пуçларĕ.

Çавăншăн вара ăна персе вĕлерђĕç... Татах тивмесђĕç пуљ, çав вăхăтра Куропаткĕн йанăрал пынă тĕл пулђĕ. Шпионсем те ун çине „вăл патшана хирĕç пыраť" тесе тĕллесе кăтартрĕç çав... Ех, шалккă, шалккă...

**Çапук.** Сан хута кĕнĕшĕнех вĕлерђĕçи?..

**Петтă.** Вăл айăплă та пулманçке... Мĕнле апла! Ех, хам çав стутентсă пулас-тăк...

**Ађасем.** Ан ђăрмантарăрха!! Каласа пĕтертĕр!..

**Йăкăнат.** Çитĕ, ађамсем... Хаљ те епĕ вăл стутента

куç умĕнђех куратăп. Ăна аса илсенех, иртнĕ пурнăç хăстараҭ мана...

**Çапук.** Ђăн есрелех пулнă çав вĕсем!..

**Йăкăнат.** Вăрçа та пирĕн йышшисене çеç кĕтӳ пек хуса кӳртсе йараҭђĕç. Мĕн ђухлĕ ђăлах, мĕн ђухлĕ вилĕ... Çавăн пирки те йала таврăнсан хуçалăхра ĕçлеме пултарайман. Нумайĕшин çемйисем тĕнђе тăрăх ђĕнкелеме туха-туха кайнă... Çитĕ, ађасем, хурлăхлă кунсем çинђен каласа сире салхулатас мар.

**Нумайĕшĕ.** Мĕншĕн епĕр ун ђухне çуралманши? Револђутси тунă пулăттăмăр...

**Микуç.** Лашасене кайса пăхса килер. Киле кайас умĕн пĕр çĕрелле пухсан та йураҭ пулмалла.

**Ађасем.** Айтăр! Ей! ей! айтăр!.. (*туй йурри йурласа саланаççĕ. Кăшт тăрсан ханкăрма сассисем тĕрлĕ çĕртен илтĕнме пуçласа çывхарса пыраççĕ*).

**Йăкăнат.** Ђуна савăнтараççĕ вĕсем. Вĕсене курсан тепĕр хут çамрăкланас килет... Ех, çамрăклăх, çамрăклăх...

**2-мĕш ст.** Иртрĕ ĕнтĕ, Йăкăнат, пирĕн çамрăклăх... Епĕр тăвахан ĕçсем çамрăк çамрăках вара... Ĕçлес килет. Йалĕпе пĕрле, пĕр çын пек... Ырмастăн та вĕт (*аҭасем çуйăхса, йурласа кĕреççĕ*).

**Микуç.** Кĕçĕр ташламан, тавай Мишша ђăс купăсна! Пĕрре шăрантарса парам. (*Мишша купăс калаҭ. Хĕрсем, каҭђăсем ҭеретлĕн ташлаççĕ. Старексем кăваҭ хурса лараççĕ. Савăнăç. Тул çутăлсах пыраҭ*).

**Йăкăнат.** Хаљ кăштах выртса кансан та йураҭ пулмалла, ађасем. Лашисем кăшт çырткалађђăр та йерипен уттарăпăр. Хăвăрах йăвăр пулаҭ вĕт. Çĕр каçиђђен выљанипе çитĕ. (*Каҭђăсем, хĕрсем вырташşĕ. Аҭасем çаплах ашкăнса лашасем пăхма тухса кайаççĕ. Аҭасен сассисем инçетре илтĕнеççĕ. Кăваҭ тĕлкĕшсе çунаҭ. Каҭђăпа хĕр уçланкă хĕрне аçам сарса лараççĕ*).

**Микуç.** Анна, ак тул çутăлса килет. Кĕç-вĕç шăпђăк сассисем илтĕнме пуçлаççĕ. Пире калаçса ларма та вăхăт нумай йулмарĕ. Паçăрах пырса калаçасшăнђђĕ епĕ, анђах темшĕн йулташсенђен иментĕм... Аван мар пек...

**Анна.** Епĕ хам та вăтанатăп, Микуç... Сан çине хĕрелмесĕр нийепле те пăхаймастăп вара...

**Микуç.** Епĕ хам та пĕлместĕп, Анна, ман йаланах сана курас, санпа пĕрле пулас килет... Йурататăп сана, Анна!.. Йурататăп. (*Анна пуçне кăкри çине хурса ађашланат*). Манăн санпа пĕрле ђухне çĕнĕ пурăнăç çулне пăхса—савăнас килет. Епĕр иксĕмĕр хамăр колхосăн нумай пусăллă уйсен илемлĕхне курса çўрер пек. Çав хушăрах уйра сап-сарă ылттăн уйра машшинсем, епĕр телейлине кура илемлĕ хурçă саслăн йанăраççĕ... Йепле аван пулмалла вăл, Анна, çĕнелнĕ уйхир, телейлĕ, йуратуллă пурнăç?

**Анна.** Микуç, Микуç епĕ, санран нимĕн те пытармастăп, ђăн-ђăн комсомолккă пек тўррипе, татса калатăп (*Микуçа хăвăрт ыталаса тытса*) йурататăп еп сана!

**Микуç.** Ех, Анна! (*хытă ыталаса ђуп тăват*). Кĕркунне çитсенех, иксĕмĕр те Рапфака! Рапфака, Анна, илтетни?!..

**Анна.** Илтетĕп, Микуç, епĕ пайан çеç мар, ун çинђен тахçантанпах шухăшлатăп, анђах ку таранђђен никама та каламан. Праççи çеç пĕлет (*çав вăхăтра уçланкă хĕррине икĕ ађа тухаççĕ. Ыталанса ларакансене курсанах хытă ахăлтатса кулса йараççĕ. Аннапа Микуç пĕр-пĕрин çумĕнђен йалт сиксе ик çĕрлĕ уйрăлаççĕ. Унтан ытти ађасем çуйăхса кĕреççĕ. Тул çутăлнă. Шăпђăк сассисем*).

**Ађасем** (*йўрлаççĕ*). Епĕр киле кайатпăр, тавай пире йапала!!! т. ыт. те. (*Ваттисем, т. ыт. çывăракансем те тăрса аçамсене илеççĕ. Ађасем çаплах йўрлаççĕ*).

**Çапук.** Тăлă, тăлă, тăлă ăçта!!.

*Ђаршав.*

# II-мĕш пайĕ.

## 1-мĕш карттин.

**Стсенă.** Йал урамĕ. Хĕвеланăç хĕрелет. Йала уйран таврăннă вăхăт. Урамра выђăх-ђĕрлĕх, ађапăђа сассисем. Кришкăсен килкарти умĕнђе.

1.

(*Кришкăпа Љава килкарти умне çитсен тьарăнса тăраççĕ*).

**Љава.** Ну, йурат еппин, каçхине клупра курса калаçăпăр (*кайма хатĕрленсе утат*).

**Кришкă** (*сасартăк темскер аса илсе*). Астуман та, тăхтаха, тăрха, Љава!.. (*Љава тьарăнса Кришкă патне пырат*).

**Љава.** Ну, вара?

**Кришкă.** Ĕçе тĕрĕслеме хуларан килиђђен пуху туса irтересђĕ. Есĕ комсомолĕссене систерме пултараймăнши?

**Љава.** Вăл йăвăр ĕçех мар, хамăр Пеťťана ђуптарап нађђас.

**Кришкă.** Пеťťана мар, вăрттăн ĕç. Пухура комсомолĕссенђен пуçне никам та пулмалла мар. Пĕлетни ес, епĕ мĕн шухăшласа кăлартăм?..

**Љава.** Мĕн?..

**Кришкă.** Комсомолĕссене пайан кунтан пуçласа кулаксене шефа илтеретпĕр.

**Љава.** М-ĕ-н?..

**Кришкă.** Итле есĕ, кайран калатăн. Кашни комсомолĕс вĕсем мĕн калаçнине, мĕн тума шухăшланине вăрттă итлесе çÿреме тăрăштăр. Çакăн пек паллă ĕç пулса иртнĕ хыççăн, вĕсем калаçмасăр ђăтайрас çук. Айăплисене нурпĕр те çаклатăпăр. Пĕђђен, иккĕн шухăшпа тунă ĕç мар вăл. Еп кăшт тăрсан клупа вĕçтерсе çитĕп.

**Љава.** Аван, кăмăла кайакан шухăш. Йурĕ. Еп вĕçтерем (*кайат*).

**Кришкă** (*хыçалтан*). Пайанхи кун йĕркинђе çав ыйту пулаť!..

**Љава.** Ăнлантăм, Кришкă!.. (*Кришкă пӳрте кĕрет. Крахйанпа Кулине васкаса Кришкăсем патне пыраççĕ. Алăк патне çитсен ђарăнаççĕ*).

2.

**Крахйан.** Ваçили пăйахамсен Микуçне килсе курас терĕмха!

**Кулине.** Микуç килнĕ тенине епĕ те илтсеђђĕ, курмасăр кайас мар еппин.

**Крахйан.** Ай, ухмах, курмасăр йепле кайан, курманни сђĕ-сакăр çул çитет те (*çав вăхăтра Йăкăнатпа 2-мĕш старик, туйаланса пыраççĕ*).

3.

**Йăкăнат.** Никколай Ваççилђђă килтехши?

**Крахйан.** Мĕнле Ник. Ваççилђђă?

**Йăкăнат.** Ара, Микуç...

**Крахйан.** Е-е-е, Микуç, епĕ хам та çавна курма килтĕм çав.

**Кулине** (*Крахйана*). Кĕрсе курар еппин. (*Çав вăхăтра Кришкă папкă çĕклесе тухаť те картђăксем çине пăхмасăрах тухса кайма тăраť*).

**Крахйан.** Тăхтаха, Кришкă! Микуç килнĕ теççĕ те килтехи?...

**Кришкă.** Ман васкамалла, килтех, килтех! Кĕрĕр. (*Кришкă васкаса кайаť. Картђăк, стариксем пӳрте кĕреççĕ. Вĕсем хапха алăкне уçсанах Ник. Ваççилтђтђă вĕсене хирĕç тухаť*).

**Ник. Ваç.** А-а, ваттисем, килĕрех, килĕр! (*Пурте Ник. Ваç. ал тытаççĕ. Çав вăхăтра атапăтђасем, хресђенсем, арăмсем пыраççĕ. Вĕсем Ник. Ваç. пурте ђерепленĕн ал тытаççĕ. Комсомолĕссем çук*).

АССР

**Крахйан.** Палламалла та мар сана, Микуç...

**Ник. Ваç.** Улшăнатпăр пулас майěпе. Епěр çеç мар, самани те улшăнсах пыраť. Ак есěр хађ ёлěкхи мар, колхос ђленěсем. Сире пăхсан такам та савăнмалла.

**Йăкăнат.** Ара, епěр те пурнăçран йуласшăн марçке, хамăр майпа пыраť пире.

**2-мěш ст.** Ваççана хěрхенетěп, Ник. Ваç., есě те савăнăçлă вăхăтра çитеймерěн, хуйхă тěлнех пултăнçке...

**Хресђенсем.** Ђăнах та, Ник. Ваç., Ваççашăн хамăр тăван ывăл пекех хуйхăратпăр. Калама çук кăмăллăђђě. Йалан халăхшăн тăрăшса ěçлетђě. Шалккă... Анђах хађ тин нимěн тума та çук...

**Йăкăнат.** Еп ват супнă пур, çаплах пурăнатăп... Йаппун вăрçинђе, таçта та пулнă...

**Ник. Ваç.** Фронтра, йалта, хуласенђе ирěклěхшěн темěн ђухлě ěçлекенсемпе хресђенсен, пирěн тăвансен йунě йухрě. Самана лăпланђě. Лăпкă вăхăтра та епěр калама çук пысăк йăвăрлăхсене пурăнса ирттертěмěр. Пирěн еретрен ђи хастарлă ватă полђшевиксем туха-туха ўкрěç. Ěçхалăхě ку пысăк хуйăхсем умěнђе пуçне усса, аллисене хуçлатса тăмарě. Хуйхăрас выранне, вилнě паттăрсем пуçланă ěçе малалла туса пыђě. Пирěн пурăнăç—кěрешў. Кěрешў вилěсěр пулакан йапала мар. Хађхи вăхăтра та клас кěрешěвě çав тери çивěђленсе пынă тапхăр. Вěсен киревсěр алли айěнђе Ваççа! Епěр те хуйхăрар мар, Ваççа туса пурăннă ěçе вěçне çитеђђенех туса пěтерер. Вăл ěç Ваççана асăнса пурăнма—ђи хаклă парне пултăр.

**Крахйан.** Итле, Кулине, ун сăмаххисенђен вут çулăмланса тухаť.

**Кулине.** Çавăн ђухлě хулара пурăнса та, ђăвашла манман...

**Йăкăнат.** Ник. Ваç. тěрěс калаť вăл. Хуйхăрнипе вилнě çынна ђěртме çук ěнтě.

**Ник. Ваҫ.** (*килкарти умĕнђи пĕренесем ҫине ларса*). Ну, тăвансем, хăвăр пурнăҫ ҫинђен мĕн те пулин каласа, парăрха? Сире курманни... ђылай пулат̆.

**Хресђен.** Пурăнкалатпăр хамăр майпа. Пурнăҫ ытла ҫăмăлах мар ĕнтĕ. Колхос турăмăр. Ҫулталăк ҫитет ĕнтĕ. Хăшпĕрисем тухкаланисем те пулкаларĕҫ. Пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнайманни те ђас-ђасах пулкалат̆. Вĕренмен епĕр, Ник. Ваҫ., ушкăнпа пурăнма...

**2-мĕш хр.** Вăл ҫук, ку ҫукки те пире ђас ђасах хирĕҫтерет.

**Йăкăнат.** Тырри пулсан ниђђава, пурăнкалăпăр... ак хаԓ кăҫал ултă пусупа пирвайхи хут ĕҫлесе куратпăр. Ырашĕ йатламаллах мар. Ерхипсен кути тут, пирĕнђен нађар. Ĕлĕк вĕсен пек лайăххи пулман.

**Крахйан.** Вăрлăхне те тасатса акрăмăр, тата акрунум кăтартса панă пек харманилпа ђӳхерĕмĕр... Уйра ҫумкурăксем ђăнах та сахалланђĕҫ.

**Кулине.** Выԓăх кăшманĕсем те витре пек сарăлса кайнă, ҫăркаҫ анђах ҫула майăн кĕрсе пăхрăм...

**Хресђен.** Акма йăвăртарах лекрĕ ĕнтĕ... Плуксем ҫителĕклĕ туйанимарăмăрҫке... (*ҫав вăхăтра урамра йурланă сас илтĕнет*).

**Крахйан.** Ваӊккă пуԓха? Ех, ҫав мăнтарăн ĕҫкĕпех вилет пуԓ ĕнтĕ.

**Йăкăнат.** Сайра хутран урă ҫӳрет пулмалла вăл.

**Ник. Ваҫ.** А-а, Ваӊккă... Хаԓ те ĕҫме пăрахманиха вăл?

**Хресђенсем.** Какуй пăрахат̆ те... Ерех катки лартса парсан унтан тухма пĕлмĕ ĕнтĕ вăл... таҫтан тупат̆ ҫав ĕҫмеллине?..

(*Ваӊккă йурласа, сулкаланса пырса кĕрет*).

4.

**Ваӊккă.** Ĕҫнисене.. тавăсйа! Ну, ну епĕ калăпăр ĕҫнĕ, ну, ĕҫнĕ... Есĕр ан йатлăр мана... Ă-ă-хит!.. (*Ник. Ваҫ.*

...Я ПАЛАТА
Чувашской АС...
№ 25.

*курса*). А-а-ĕ-ĕ, ă-ă-хип!.. Николай Василъъă... ă-ă-хип!.. сторовă, миçе çу, миçе хĕл, ă-ă-хип! Ну, ес, ан йатла мана. Ну, калăпăр епĕ ĕçнĕ, еп ÿсĕр, Ник. Васçилъъă, ă-ă-хип! Ай йаккуђ йвађ! Пурăнас-тăк пурăнас, Ник. Ваç., çапла-и?!. ă-ă-хип!.. Ĕçес мар та, пурнас мар. Хыпатпăр штолĕ епĕр йаккуђ йвађ!.. Ну ес калăпăр хуларан килнĕ, Ник. Ваç., хулара аван майрасемпе çÿрекелен пулсан йурать хать, ă-ă-хип... Çан ъоъ сынна майрасáр пурăнни килĕшмест; айта, йарапар май килнĕ ъухне, ă-ă-хип!.. Çапла мари, Ник. Ваç.?!

**Хресъ.** Ес кăштах кайса çывăрха, Вађккă!..

**Вађккă.** Еп ытлашши ĕçместĕп, ĕçкĕпе нихçан та тăнран кайман еп, ă-ă-хип!.

**Крахйан.** Кайса выртсами ĕнтĕ, Вађккă.

**Вађккă.** Ник. Ваç. курнă пек ъух калаçамха, ан ъăрмантарăр есĕр мана! ă-ă-хип!.. Ник. Ваç., есĕ тÿррипе кала мана, çилленместĕн вĕт есĕ мана?..

**Ник. Ваç.** Кăшт выртса кансан та йурать пулмалла сана.

**Вађккă.** Ниъъава, Ник. Ваç... епĕ ывăнман, ă-ă-хип!..

**Йăкăнат.** Вађккă, есĕ калама çук аван, итлекен пулаканъъĕçке? Кайса выртах улăм (*икĕ хресъен Вађккăна пырса тытаççĕ*).

**Хресъен.** Карăмăр, Вађккă, хамăр пата. Ман кăшт сыпмалли те пуръъĕ.

**Вађккă** (*кулаççĕ*). Сыпмалли?! ă-ă-хип!.. Ну, Ник. Ваç., ес ан йатла мана. Епĕ кăшт, ă-ă-хип!.. сыпса килем, вараpахпа курăпăр, Ник. Ваç., ăхип! (*Вађккă йурлать. Хресъенсем иккĕн çавăтса кайаççĕ. Нумайĕшĕ кулаççĕ. Вађккă сасси инçете кайса çухалать*).

**Крахйан.** Пулать кам етем, уншăн пулсан тĕђъе çурăлса тухтăр хать.

**Кулине.** Ъăн-ъăн пăйантсах ĕнтĕ. Перви сорт (*кулаççĕ*).

**Ник. Ваç.** Пăсăлнă çын вăл, тăвансем. Ăна тÿрлеммелли

вырăна йарсан ҫип-ҫипер, пирĕн пек етемех пулма пултарат̆...

**Кулине.** Усĕр ҫынна мĕн тӳрлетмелли пур ăна, ҫирлĕ ҫын мар вăл?

**Ник. Ваç.** Ĕçкĕ ҫынна ҫирлеттерет. Çав ҫирпе ҫирлесен етем нийепле те ĕçмесĕр пурăнаймаст̆. Сывалмалли вырăна йарсан çеç ăна тӳрлетме пулат̆. (*Ерхиппе тепĕр кулак иртсе кайаççĕ. Иртнĕ тъух Ник. Ваççилтътъа пуç тайаççĕ*).

**Хресҫен.** Çак калтасем пире ҫылай ҫăрмантаркаларĕç. Вĕсем йаланах колхоса хирĕç. „Выçă вилсе пĕтеттĕр есĕр, вăрçă тухсанах колхоса кĕрекенсене пĕрерĕн-пĕрерĕн çакса вĕлерсе пĕтереççĕ, комуниссем ҫейе вĕсем“ тесе ҫип-ҫипер халăхах пăтратса йараççĕ.

**2-мĕш хр.** Çавсен сăмаххи хыççăн айса нумайăшĕ колхосран тухрĕç çав.

**Йăкăнат.** Хаљ аптрамастпăр ĕнтĕ...

**Крахйан.** Ĕлĕк те вĕсен куçĕнҫен нумай пăхнă!.. Вĕсем хăйсемшĕн çеç.

**2-мĕш ст.** Ку таранҫҫен нимех те тăваймарĕç теха. (*Комсомолĕссем: Кришкă, Љава тата иккĕн-виççĕн кĕреççĕ те халăхпа пĕрле хутшăнаççĕ*).

5.

**Љава.** Колхос ҫленĕсем çителĕклĕ пур ҫухне пуху туса иртерсен те ҫăрмантармĕҫҫĕ.

**Хресҫенсем.** Кирлĕ пулсан тăвас, ма тăвас мар, апат çийеҫҫен туса та иртерĕпĕр.

**Кришкă.** Кун йĕрки çинҫе икĕ ыйту, пĕремĕш—Ваççана пытарасси, тепри—Микуç ĕçлекен трактăр савăҫĕпе çыхăну тытасси, йышăнатпăри?

**Хресҫенсем.** Йышăнас, йышăнас!!!

**Кришкă.** Љава, пӳртрен сĕтел илсе тухха! (*Љава тъупса кĕрсе кайат̆*). Пуху иртерме преçитиум суйласа лартмалла.

**Хресҗенсем.** Ник. Ваç. Кришкă, Лҗава пулҗҗăр...

**Теприсем.** Крахйана та лартас...

**Кришкă.** Тăвата кантитат, суйлатпăри? хирĕç тăракансем пури?

**Сасăсем.** Мĕн хирĕç тăмалли пултăр унта, кирек кам ларсан та çавах мари?

**Кришкă.** Килĕшетпĕр апла! (*Лҗава сĕтел илсе тухать*).

**Хресҗенсем.** Килĕшетпĕр, килĕшетпĕр!.. (*шăпланаççĕ.*)

**Кришкă.** Йулташсем! Револҗутсишĕн çапăçса вилекенсен йатне пуç хатĕрĕсене хывса җыслар (*пурте пуç хатĕрĕсене хывса тăраççĕ*). Хамăрăн хаклă, вăхăтсăр җаплă вилĕмпе вилнĕ çамрăк йулташа, Ваççана, ыран çĕре җикетпĕр!.. Ман шухăшпалан Ваççашăн ыранхи ĕç кунне парнелесен те йурать. Вăл уна илме тивĕçлĕ. Ваçça мĕнле вилĕмпе вилнине Микуç пиҗҗе каланинҗен тăнланса йултăр пулмалла, йулташсем. Ыран ирхине пур колхос җленĕсен ытти хресҗенсене те клуп патне пухăнма җĕнетĕп епĕ. Ман урăх сăмах çук, кам мĕн калас текенсем калăр!..

**Комсом.** Хулана ытлашши инçех мар, мусăк илсе килес...

**Лҗава.** Халҗ кас пулса килет, кайа йултăмăр, маларах шухăшламаллаҗҗĕ.

**Кăмсомолĕссем.** Хамăр кайса килетпĕр, кĕçĕрех тухса вĕçтеретпĕр!..

**Кришкă.** Кун пирки мĕн калас текеннисем пур?

**Нумайĕшĕ.** Май килет пулсан илсе килҗҗĕр, пытарнă пытарнах ĕнтĕ...Йышăнас! йышăнас!..

**Комсомол.** Епĕр карăмăр еппин! Кришкă хут çырса патăр та.

**Кришкă.** Ку ыйтупа урăх калаçас текенсем çуки?

**Сасăсем.** Çук, çук!.. айта малалла!

**Кришкă.** Малалла Микуç пиђђене сăмах паратпăр (*пурте шăпланаççĕ*).

**Ник. Ваç.** Йулташсем! Пайанхи калаçура епĕ сирĕн пурнăçпа çителĕклĕ паллашрăм. Сирĕн ĕçри çитменлĕхсем çинђен те аван пĕлетĕп. Кирек мĕнле ĕç те малтанах йăвăртарах пулаť. Кунта колхоçнĕксем хугла сахал пĕлни, авалхи йăласем сӳрĕлсе пĕтменни, пуринђен ытларах клас тăшманĕсем—кулаксем тĕрлĕ майсемпе ĕçре пӳлсе пыни нумай ђăрмантараť. Анђах ку ђăрмавсене, есĕр хăвăр тăрăшнипе çеç пĕтерсе пыма пултараттăр! Епĕр, савăтри ĕçлекенсем, сире кирек хăçан та пулăшса пыма хатĕр. Малашне сирĕн колхоса епĕр шефа илсе, сирĕнпе çирĕп çыхăну тытатпăр. Хамăр алăпа тăвакан трактăра, хамăр укçапа илсе парса йарăпăр. Вĕрсну йенђен те тĕп йалхуçалăх стантсипе çыхăну тытса сире пулăшăпăр. Епĕр сире машшинсем, есĕр пире тырпул йенђен пулăшса пырăр. Епĕр сахалăн мар, пирĕн савăтра ĕçлекен рапођђисем çирĕм пин ытларах. Çапла вара колхоспа савăт хушшинђи çыхăну сывă пултăр!.. (*ал çупаççĕ*). Пирĕн ĕретрен тухса ӳкнĕ хастарлĕ çамрăк Ваççа вилĕмне, хамăр хушăри çыхăнува çирĕплетсе ђыслар!.. (*Пурте пуçсене ђиксе тăраççĕ*).

**Йăкăнат** (*старике*). Ник. Ваç. каланине итлесе тăрса епĕ хам ăçта тăнине тн манса кайнă. Ну малашне пирĕн пурнăç карĕ... Трактăрсăрах йусана пуçларăмăр...

**Хресђен.** Ухмах, трактăр пулсан вара пушшех уралатпăр.

**2-мĕш.** Пĕр çын уйа сухаласа тума пултараť те. Ыттисем çав вăхăтра темтепĕр тума пултараççĕ.

**Ђава.** Епĕ хамăр колхоçнĕксен йађĕпе Ник. Ваççилђђăна хирĕç сăмах калас тетĕп.

**Хресђенсем.** Кала, кала, Ђава!.. вăл та пирĕнне

итлетĕр!.. савăта кайсан епĕр каланисене ĕçлекенсене каласа кăтарттăр!..

**Ђава.** Епĕр пуçласа йанă ĕç, сотсиалисăм тăвас ĕç. Вăл çав тери ђаплă, ђыслă ĕç!.. Анђах епĕр ниçтан та пулăшу пулмасан, пире ку ĕçре кăтартса йертсе пыракан пулмасан, хамăр тĕллĕнех нумай малалла кайаймăпăр!.. Йалхуçалăхне тĕрлĕ машшинсем, трактăрсем, минерал çăнăхĕсем т. ыт темĕн ђухлех кирлĕ. Кашни колхоçнĕк йалхуçалăх ĕçĕнђе акроном пулмашкăн пирĕн вĕренмелле, вĕренмелле. Вĕренӳ тĕлĕшĕнђен те пулăшу кирлĕ. Хамăр епĕр укçатенкĕ тĕлĕшĕнђен малтанлăха ђухăн, патшалăх та пурне те пулăшса çитереймĕ... Çакнашкал йăвăр тапхăрта пире трактăр савăтĕнђе ĕçлекенсем хăйсен хурçă мосоллĕ аллине пађĕç! Пирĕн хаваслăха сăмахпа каласа пама çук.!.. Епĕр йаланах сирĕнпе пĕрле, клас тăшманне тĕппипе кăкласа пăрахађђен çапăçма хатĕр тăратпăр!.. (*ал çупаççĕ*).

**Кришкă.** Ђава каланă сăмахсемпе килĕшетпĕри?

**Хресђенсем.** Килĕшетпĕр!.. Йышăнас, йышăнас!..

(*Çав вăхăтра Ерхип тата виç-тăват кулак тухса, пухуран айакра ђарăнса тăрса канашлаççĕ*).

6.

**Ерхип.** Таçтан çăва-патĕнђен илсе килђĕ çав усалла 18-мĕш çулта та вăл пайтах çынна макăртрĕ.

**Çĕпиркка.** Йала пушшех пăтратса хăварăӳ ĕнтĕ вăл Шăлнĕ те унтан кайа мар.

**Çилвестăр.** Асту, хĕн пулаӳ пире пурăнма.

**Ађапăђăсем.** (*кулаксен ушкăнне кăтартса*). Пăхăрха пăхăр! Халĕ пурте пĕр йышши çĕтĕк кулаксем пухăннă!.. (*Пуху ахăлтатса кулаӳ. Çилĕллĕ сăмахсем илтĕнеççĕ. Кулаксем пĕр-пĕрин çине çаврăнса пăхкаласа кайалла çаврăнса утаççĕ*).

**Йакӑнат.** Тӑхтӑр ак, трактӑр килсен сире те таптаса кайӑпӑр!.. трахтӑр вӑл, трахтӑр ун айне лексен ҫӑлӑнса йулаймӑн (*пурте кулаҫҫӗ*).

**Комсом.** Кришкӑ, есӗ пире хӑвӑртах хутна ҫырса пар та епӗр вӗҫтерер!

**Кришкӑ.** А-а, йурӑт, йурӑт халех!.. Ну халӑх, хаљ саланма та пултараттӑр ӗнтӗ... Кун йӗркинђи ыйтусем пӗтрӗҫ (*хут ҫырса парать. Комсомолӗссем кайаҫҫӗ. Хресђенсем саланаҫҫӗ. Цурте Ник. Ваҫҫилтђђӑна харпӑрхӑй патне ҫитсе курма ђӗнеҫҫӗ*).

**Крахйан.** Пырса лар, ара, халап йама, пырса лар. Нумайлӑхаи ес?

**Ник. Ваҫ.** Ҫитӗпӗрха епӗр, тепрер икӗ ерне пурнатӑпха. (*Цурте саланса пӗтеҫҫӗ. Кришкӑ, Ник., Ваҫ. Ђава пӳрте кӗреҫҫӗ*).

7.

**Ваңккӑ** (*йурласа, суйӑхса пырать. Ун хыҫҫӑн атђапӑтђасем ђупаҫҫӗ. Утнӑ май ђарӑнать те атђасем ҫине пӑхса тӑрсан-тӑрсан каллех утать*). Ӑ-а-ӑ!.. (*атђасене хӑвалать, атђасем пӑр-р саланаҫҫӗ, кӑшт тӑрсан каллех пухӑнаҫҫӗ*). Ну, епӗ ӗҫнӗ пулам, ну ӗҫнӗ... Сирӗн укҫупа ӗҫмен еп, ӑ-ӑ-хип!.. Ӑ-а-ӑ!.. Йаккуң йваң!.. *Атђасем каллех саланса пухӑнаҫҫӗ. Йурлать*). Е-х! салакайӑк ҫурисем, аҫу ҫӑкрине ҫийеттӗр есӗр! ӑ-ӑ-хип!.. Ваңккӑ ђухлӗ пурӑнса курӑр малтан! ӑ-ӑ-хип!.. (*Пӳртрен Ник. Ваҫ., Ђава тата Кришкӑ тухса клупалла утаҫҫӗ. Хӗвел анать. Ваңккӑ вӗсене асӑрхаймасть, атђасем те Ваңккӑ ҫине пӑхнӑ май вӗсене курмасӑрах йулаҫҫӗ*).

**Крахйан** (*стеенӑ хыҫӗнђе*). Пет-ӑ-у! Мишша! апат ҫиме, ђасрах!.. (*Атђасем пӗрерӗн икшерӗн саланса пӗтеҫҫӗ. Ваңккӑ пӗтђђенех тӑрса йулать*).

**Ваңккӑ** (*йурлать*). Ну, Ерхип пиђђе! (*Ҫав вӑхӑтра*

*пĕр комсомолĕс урампа утса иртсе кайма тăрат, Ерхип тенĕ сасса илтсенех вăл пÿрт кĕтессине кайса лăптăнат. Ваҥккă асăрхамаст*). О-о-хип!.. Епĕ сана хăçан та пулин, тавăрăп, тавăрăпах!.. Манран çĕтĕк-çатăк Ваҥккăран кулма! О-о-хип! Кулма-и?.. Есĕ мар пулсан Ваçça ђипђиперех пурăнађђĕ! О-о-хип! Ах, шалккă, шалккăçке Ваççана, çамрăк çынна мĕншĕн вĕлерес? О-о-хип! Мĕншĕн?.. (*Йĕрет, йурлат, тайкаланса утса кĕрсе кайат*).

**Комсом.** (*çаврăнкаласа кайла-майла пăхкалат те хăвăрт ђупса тухса кайат*). А-а-а, лекрĕри!.. (*Хăвăрт ђупса кайат*).

*Ђаршав.*

## II-МĔШ ПАЙĔ.

### II-мĕш карттин.

**Стсенă.** Урам. Клуп çурђĕ тĕлĕнђе. Хĕвел анса ларнă. Каç. Вуламалли çурт умĕнђе никам та çук. Алăк çине „Шĕшкĕлĕхри" колхос клупĕ тесе çырнă вывĕскă çакăнса тăрат. Ђылайран.

1.

**Комсомол.** (*хăвăрт васкаса ђупса кĕрсе клуп алăкĕ умĕнђе кăшт сыв лăш çавăрат те алăкран кĕрсе çухалат. Унтан çав самантрах сиксе тухса урам тăрăх ђупса тухса кайат*).

2.

**Ерхип** (*йăпшăнса пырса, клуп айккине пытанат*).

3.

**Ник. Ваç.** (*Кришкă, Лђава, Ник. Ваç., вĕсем умĕнђе комсомолĕс малта, васкаса пырса кĕреççĕ те алăк умĕнђе ђарăнса тăраççĕ*). Ытлаши ан хыпаланăр, йулташсем. Йерипе, Ерхипсене систермесĕр тăвас пулаť. Есĕ, Лђава, лаша кÿлсе вĕçтер хулана, атту тахçан килеççĕ вĕсем.

Епӗр кунта виҫҫӗн хамӑра кирлӗ пек ӗҫсене майлаштарӑпӑр. Колхоҫнӗксене покка ни, ни!..

**Ҫава.** Йурӗ, Ник. Ваҫ., ҫурҫӗрҫҫен кайалла таврӑнма ӗлкӗреп (*хӑвӑрт ҫупса тухса кайат*).

**Ник. Ваҫ.** Есӗр, Кришккӑ, Йаккупа иксӗр Ерхипсен тӗлне. Кирек ӑҫтан виссе, ан тухса тартӑр вӑл. Смотри кирек ӑҫтан кайаҭ пулсан куҫран ан ҫухатӑр, хӑвӑр та ун куҫ умне ан курӑнӑр!.. Епӗ хам Ваҫккӑна тӗл пулса тӗплӗнрех ыйтса пӗлем... Ну, хӑвӑртрах, кашни харпӑр хӑй вырӑнне. (*Пурте саланаҫҫӗ. Иккӗн пӗр ҫӗрелле, тепри тепӗр ҫӗрелле*).

4.

**Ерхип** (*сиксе тухса*). Ҫук, кайаймӑн, Ҫава, хулана (*хӑварт ҫупса кайса, вуламалли ҫурт хыҫне ҫухалаҭ*).

5.

**Ҫапук** (*пӳрт умӗнҫе айаккарах выртакан пӗренесем хыҫӗнҫен сиксе тухса*). А-а-а, есӗр ҫаплаи?! (*хӑвӑрт Кришкӑпа Йакку кайнӑ ҫулпа тухса ҫупаҭ, стсенӑ ҫинҫе пӗр самантлӑха шӑп*).

6.

**Крахйан** (*Йӑкӑнат, 2-мӗш старик, Крахйан, Кулине каласса пырса кӗреҫҫӗ*). Ех, мӗскӗн Ваҫҫа, йулашки каҫ ҫывӑратӑн кунта. Ват Крахйан сан патна пырса куҫҫуль тӑкнине те туймастӑн ес.

**Йӑкӑнат.** Хам пурнӑҫра темӗн ҫухлӗ виле ӑсатрӑм пулин те, Ваҫҫа вилӗмпе вилекенне курман.

**Кулине.** Айтӑр, кӗрса ларар.

**2-мӗш.** Ҫӗр каҫиҫҫен ларса йӑлӑхтарӗ, ӑҫта васкан?

**Йӑкӑнат.** Урамра лармa килмен вӑт епӗр, килнӗ киллех, кӗрсе ларасах пулаҭ ӗнтӗ, кӗҫ ак ҫамрӑксем те килӗҫ...

**2-мӗш.** Айтӑр еппин кӗрер (*пурте кӗреҫҫӗ. Вӗсем кӗрсен ҫылайран Аннапа Верук пыраҫҫӗ*).

**Анна.** Мĕн вăтанмалли пур унта, есĕр пĕр-пĕрне йуратса пурăннине пĕлмеççĕим?

**Верук.** Анна, епĕ ку таранђђен санран нимĕн те пытарман, малашне те пытарма шухăшламастăп. Епĕ ĕнтĕ иккĕмĕш каç куç хупмасăр, апат çимесĕр пурăнатăп. Хуйхăрас мар тенĕ çĕртенех хуйхăратăп. Ваççа ўтне курсанах, çынсем куç умĕнђе йĕрсе йамасăр пурпĕр ђăтайарас çук. Анна, епĕ кĕместĕп, есĕ кĕрсе пăхса тух?..

**Анна.** Айта, Верук, иксĕмĕр пĕрле кĕрсе тухатпăр, хаљ çынсем пулсан та нумайах пулас çук. (*Верук йĕрет*).

**Анна.** Лăплан, Верук, тархасшăн лăплан!. Хуйхăрнипе пурпĕрех кайалла тавăрас çук.

**Верук** Ах, Анна!.. ђăтаймастăпçке!..

**Анна.** Çитĕ, çитĕ ĕнтĕ, Верук, лăплан...

**Верук** (*куçĕсене тутăр кăларса шăлкалат*). Çук, епĕ урăх йĕрместĕп, Анна... (*ĕсĕклесе йĕрсе йарат*).

**Анна.** Айта, Верук, çынсем килеђђен хăвăртрах кĕрсе тухатпăр?

**Верук** (*йĕме ђарăнса куççуљсене шăлса типĕтет*). Айта еппин... (*кĕреççĕ. Алăк хупăнсанах клупра сасартăк хытă кăшкăрса ĕсĕклесе йĕнĕ сасă илтĕнет*).

**Крахйан** (*клупра*). Ех апăрша çамрăк ђунĕ, çунмаллипех çунаť пулаť ѐнтĕ... Ытлашши хуйхăрса хăвна ху пĕтеретĕн, Верук!.. Лăплан, хĕрĕм, лăплан...

**Кулине.** Ах, Анна, илсе килес пулмастђĕ сан!..

**Анна.** Хăй килесшĕн пулђĕ те, илсе килтĕм (*Верук йĕрет*).

**Йăкăнат.** Мĕн калаçатăн, Кулине, çамрăк ђухне хамăр та çавнашкалах пулнă вĕт?

**Анна.** Верук, çитĕ ĕнтĕ, çитĕ, Верук, айта кайăпăр... (*Кăшт тăрсан Анна Верука çавăтса тухаť. Верук йĕрет.*

*Куçĕсене шăлат, клупран кăшт айаккарах кайсан Верук клуп-çинелле çаврăнса пăхат).*

**Верук.** Ех, Ваçça!.. (*ĕсĕклесе йĕрет, Анна çавăтса тухса кайат. Крахйанпа Кулине клуп алăкне уçса пăхса тăрса йулаççĕ*).

**Крахйан.** Ах, шелçке, мĕскĕн çамрăк ђунне... Мĕнле асапланаťши вăл? (*куçне шăлкалаť*).

**Кулине** (*Крахйана кура йĕрет*). Кам есрелли вĕлерсе карĕши?!. (*алăкне хупаççĕ. Кришкă комсомолĕс тата Çапук тухса хăвăрт иртсе кайаççĕ. Ђылайран колхоçнĕксем, хĕрсем, атђапăтђасем пыраççĕ. Хăшпĕри тўрех клупа кĕреççĕ. Икĕ колхоçнĕк крыђтса умне ларса тђĕлĕмсене тђĕртсе йараççĕ*).

8.

**1-мĕш колх.** Пурнăçра темпĕр курмалли те пулĕ.. Ђип-ђипер шăкăртатса пурăнаттăмăр. Колхос тунă ђухне кăштах харкашкаларĕç ĕнтĕ... Халђ лăпланђĕсха, малалла хамăр пурнăçа йерипе йусаса пули тесе çеç ĕмĕтленсе пурăнатпăр. Таçта çăва патĕнђен сиксе тухрĕ инкек? Неушлĕ Ерхипсемех турĕç ку ĕçе? Ыттисем çинђен шухăшлама та аптратаť... неснай...

**2-мĕш колх.** Ним калама та аптрамалла... Ник. Ваç. килеђђен епĕ хам та колхос çине урлă пирлĕ-пăхкалама пуçласађђĕ... Пĕр кун епĕр Ерхиппе калаçрăмăр... Вăл каланă тăрăххăн ђăнахах та кайлă-майлă шухăшлаттараť. Как никак Ерхип пурнăç туса курнă çын, ђăн та калаť çав Ерхип тесе шухăшлатăм. Çĕркаç Ник. Ваç. курса калаçма лекрĕ, епĕ пĕр тунмасăрах Ерхип каланă сăмахсене каласа патăм. Ник. Ваç. пуçларĕ ăнлантарма... Ун сăмаххисене илтсен Ерхип ђăнахах тĕрĕс марри аван палăрђĕ. Тем... вара, Ерхип унашкал хăтланакан çынши?..

**1-мӗш колх.** Шанма ҫук, пуйансем вӗсем йаланах калаҫнӑ ђухне илемлӗ калаҫаҫҫӗ. Ӗҫне курсан, йӗрӗнтереҫҫӗ. Пирӗн пек ђухӑнсене кун памастђӗҫ ӗнтӗ. Ӗҫлесен те ҫур укҫа, айта! пыраӗ ђухӑна, теҫҫӗ пулмалла. Астӑватни, выҫлӑх ҫулхине мӗн хӑтланђӗҫ вӗсем? Епӗ хамах аптраса сарайа пӑт ҫурӑ тырӑлла сутрӑм. Нимӗн именмесӗрех илђӗ вӗт ҫавна. Пӗлет вӗт вӑл, ҫынни нуша пирки сутнине. Е-е-е! ан калаҫ та ҫав... Пуйанран йытӑ ҫӑварӗнђен шӑмӑ илеймен пекех, нимӗн те вӗҫертсе илеймӗн. Ҫавӑнпа шанмастӑп епӗ вӗсене...

**2-мӗш колх.** Вӑл ҫапли ҫаплах ӗнтӗ...

**1-мӗш колх.** Ун ҫинђен мӗн калаҫмалли пур, вӑл калаҫмасӑрах паллӑ. Пурнӑҫ хӑйех кӑтартаӗ ӑна... Сирӗн шухӑшпалан Ник. Ваҫ. ӑслӑ ҫын марим?.. Ник. Ваҫ. кирек хӑҫан та мӑн кӑмӑллӑ мар, тарам вӑл пысӑк хулара ӗҫлет... Кам мӗн каланине веҫех итлет, кашнинех кирлӗ пек Канаш параӗ... Ђухӑн ҫын вӑл кирек мӗнле ђына кӗрсен те хӑйне хӑй мӑнна хумасӗ. Илсе пӑхӑрха есӗр тепӗр пуйана, вӑл кӑтартӗ!..

**Крахйан** (*сассы клупран илтӗнет*). Кӗрсе ларӑрсами есӗр, мӗн иккӗнех пакӑлтатса лараттӑр?!.. Кађђӑпа хӗр мар пулђске есӗр?..

**1-мӗш колх.** Ан йатласа пӑрахах, Крахйан аппа, кӗрӗпӗрҫке (*лараканесене*). Айтӑр, кӗрсе ларар штоль!..

**2-мӗш колх.** Кӗрер еппин, вӗсем мӗн йумах йарса кӑтартнине итлер! тӑхтӑрха пӑртак, калаҫар. Крахйан аппа тем те калӗ вӑл, ун хыҫҫӑн кайса...

**Крахйан.** Тем сепӗлтетме пуҫларӗҫ ӗнтӗ, Крахйан, Крахйан... Крахйан сирӗн кӗсйуна кӗрсе ларђӗ

**1-мӗш колх.** Айтӑрха кӗрселарар, ҫав Крахйан пӗр шӳт тума пуҫласан кайаӗ вара (*кӗрет, ун хыҫҫӑн ыттисем те кӗреҫҫӗ*).

**Ваӊккӑ**(*пӗтътенех, йеринен сулланкаласа хуллен, йурлакаласа тухат. Алӑк патне ҫитсе тӑрса хӑлӑпран тытса шухӑшласа тӑрат*). Пурпӗрех мана нимӗн те тӑвас ҫук, епӗ айӑплӑ мар, ҫук, ђӑтаймастӑп епӗ!.. Мӗн пулат килет! (*Алӑка уҫса*). Ник. Ваҫ. кунтаи?

**Крахйан.** Тем ёҫпе, Ваӊккӑ...

**Сасӑсем.** А-а-а, Ваӊккӑ!.. Ваӊккӑ!.. киђах, Ваӊккӑ!..

**Ваӊккӑ.** Мана Ник. Ваҫ. кирлӗ...

**Сасӑсем.** Ник. Ваҫ. пайан кунта килнине курман, килӗнђе пуђха?.. (*Ваӊккӑ нимӗн тъӗнмесӗр, пуҫне тъикке кӑйаллъ тухса кайат*).

**Крахйан** (*алӑка уҫса тӑрса*). Тем... ахађ мар пуђ ку, кӑна мӗн те пулин пулнах, хӑт те мӗн калӑр!..

**Сасӑсем.** Ей-й, ҫав, тем пулмалли пултӑр ӑна!.. Уншӑн пулсан ӗҫкӗ пултӑр, ай хађ тин пӗлеттӗр есӗр ӑна!? (*Крахйан алӑка хупат. Таҫта, инҫетре пӑшал сасси илтӗнет. Клупра ларакансем итлеҫҫӗ. Иеткӑ питӗ хӑвӑрт тъупса пырса клуп алӑкне уҫат*).

**Петта.** Тухӑрха! тухӑр! пӑшал сасси!.. (*клупран пурте хыпӑнса тухаҫҫӗ те, унталла-кунталла пӑхаҫҫӗ*). Веҫ ҫанта хула йенђен илтӗнђӗ.

**Крахйан.** Кай! Пустуй лапӑртататӑн ес, Петта?!

**Кулине.** Ах, ђӗре! ах, ах, хӑрарӑмҫке.

**1-мӗш кол.** Ес, Петта, унашкал пустуй ан хӑратса ҫӳре! Йурамаст ун пек, ху ахађ ђухне пионер тесе ҫӳретӗн...

**Йӑкӑнат.** Шартах сиктерђӗ мур ађи, епӗ ӑҫта, пушари тетӗп.

**Петта.** Ђӑн-ђӑн пионерла сӑмах, ђӑнах та илтӗнђӗ.

**Крахйан.** Сана патак хуҫӑлни те пӑшал сасси пек туйӑнат пуђ? (*ҫынсене*) айтӑр, кӗрсе ларӑр, мӗн хӑйамат пӑшалӗ пур тата унта!..

**1-мĕш колх.** Ну, Петкка, тек-тек унашкал ан хăтлан (*пўрнипе йунат*), смотри сана!..

**Петта.** Ђăн-ђăн пăшал сасси пекех туйăнђĕ те...

**Йăкăнат.** Ну, йурĕçке, пĕррелĕхе хăлха пăрмасăрах каçарар (*вăрттăн кулат. Петта айăплă çын пек пуçне тъиксе тухса кайат*).

**Крахйан.** Ађана пустуйах кўрентертĕмĕрçке.

**Йăкăнат.** Епĕ шўт туса çеç-çке, Крахйан...

**Крахйан** Ара, епĕ те...

**2-мĕш колх.** Çитĕ ĕнтĕ пакăлтатма, айтăр, кĕрсе ларар.

**Кулине.** Ах, ђĕре, хађ те лăпланаймастăп (*умлă-хыçлă кĕре-кĕре кайаççĕ. Кăшт тăрсан Ник. Ваççилтъгъăна пĕр атъл малта тъупса пырса кăтартат*).

10.

**Пионер.** Вăл веç çавăнталла анса карĕ. Ник. Ваç. та Ник. Ваç. ăçта? тесе минтретрĕ мана!..

**Ник. Ваç.** Айтаха, Саңккă, иксĕмĕр кайса шыраса тупар! Йалтан тухсах кайман пуђ вăл?..

**Пионер** (*хавасланса*). Епĕ йаланах хатĕр, Микуç пиђђе (*хăвăрт тухса кайаççĕ. Кăшт тăрсан Кришкăпа тепĕр комсом, хăрах ури çине пусайман Çапука çавăтса кĕреççĕ*).

11.

**Çапук** (*нăйкăшат*). Хам пулман пулсан, Љавана çул çинђех персе антарађђĕ вăл. Есĕр алăк умĕнђе калаçса тăнă ђухне, Ерхип таçта кайма тухнă, сире курсанах клуп айккипе йăпшăнђĕ... Ва...

**Кришкă.** Çитĕ, Çапук, ытлашши ан калаç, ыратаť вĕт сан... Паçăр çул çинђе каласа кăтартнипе те çитĕ, тăнлантăмăр епĕр... Сана ку ĕçшĕн калама çук пысăк тав тăватпăр, Çапук. Есĕ ђăн-ђăн паттăр, çамрăк паттăр!.

**Комсом.** Кĕçĕрлĕхе аптрамаст пулсан, ыран ирех пуђнитсана йеçсе хăварăпăр.

**Çапук.** Çук, ытлашши ыратмаст ман (*кăшкăрса йарат*).

**Кришкă.** Айта хамăр пата илсе кайса вырттарăпăр (*йерипен çавăтса тухса кайаççĕ. Вĕсем кайсанах Ник. Ваç хăвăрт пырса клупа кĕрсе кайат. Клупри çынсем урама хыпăнса тухаççĕ*).

**Ник. Ваç.** Кунта виççĕн-тăваттăн йулсан çитет. Ыттисем айтăр!.. Саланăр йалĕпе!.. (*çынсем пурте ђупа-ђуна тухса кайаççĕ. Клуп умĕнђе Крахйан, Кулине, Йăкăнат, 2-мĕш старик йулаççĕ*).

**Крахйан.** Вăт шухăшла-м-ан!?. (*Урамра сасăсем илтĕнкелеççĕ*).

**Кулине.** Ей, ара, Ерхипе кам унашкал тетĕр, ђиркӳве те çӳрет. Пађăшкăсем килсен те йалан ун патне кĕрсе хăналанаççĕ...

**Йăкăнат.** Кришкăсем ахаљтен мар ĕнтĕ пуйанпа пупсене пĕтересси çинђен йумахлаççĕ. (*Кришкăпа комсом. йерипен утса тухаççĕ*).

**Крахйан.** Ара есĕр çывăрса йулнăиç?.. Микуçпа пĕтĕм халăх Ерхипе тытма ђупрĕç! Ваççана çав вĕлерттернĕ, теççĕ!..

**Кришкă.** Ерхип катана тарса çухалђĕ, Çапука персе урине амантнă... (*Комсомолĕса*). Ну! айта!.. (*тухса ђупаççĕ*).

**Крахйан.** Ара, паçăр Петĕ̆а калани çавăрăнса çитрĕиç.

**Кулине.** Çапука? Çапука мĕншĕн?.. Çав пĕђĕк ађана мĕншĕн пемелле!.. ах, есреллĕ, есреллĕ...

**Йăкăнат.** Пĕђĕкки мĕнне тиркесе тăмаççĕ вĕсем, пĕр урса кайсан çул çинђе кама тĕл пулнă çавна...

**Крахйан.** Пайантан пуçласа пуйанне, турри мĕнне ђĕрне хури тăршшĕ те шанмастăп...

**Кулине.** Крахйан, Крахйан! ара пурте Ерхип пек жулаççи вара?

**Йăканат.** Хам ёмĕрте ђылай куркаларăм, таçта та çитсе çапăнтăм анђах Ерхип пек маррине курса пулмарĕ! (*клуп патне Љђава, милитси, ППУ-ран тата икĕ сăран пишаклăскерсем пырса кĕреççĕ. Çав вăхăтраката йентђи васăсем çывхарса килеççĕ. Ерхип питĕ хăвăрт ђупса тухса жуларан килнисен аллине пырса лекет*).

**ППУ-ран килни.** Стой!..

*Ђаршав.*

## III-МĔШ ПАЙĔ.

### 1-мĕш карттин.

(*Çултталăк иртсен*)

**Стсенă.** Клупра. Çтенасем çинђе колхос çинђен калакан лосăнксем, жлаккатсем. Ратио. Кĕнеке шкапĕсем. Сĕтел, т. ыт. Çуркунне, çĕр типес умĕн.

1.

(*Клупра никам та çук. Кăшт тăрсан Љђавапа Кришкă кĕреççĕ*).

**Кришкă.** Итлеха, Љђава, новăç... Пайан пускилсем пирĕн пата хăнана килеççĕ. Пирĕн вĕсене хапăл тума хатĕр пулмалла.

**Љђава.** Мĕнле пускилсем çинђен калаçатăн ес?

**Кришкă.** Хамăрпа йунашар пурнакан йалсем епĕр мĕнле пурăннине курма килеççĕ.

**Љђава.** Е-е-е, мĕн хатĕрленмелли пултăр унта, курса кайђђăр.

**Кришкă.** Курса кайассине кайĕç-теха вĕсем, анђах вĕсене хамăр мĕнле çулйĕрпе çак тарана çитнине каласа памаллах пулаť. Вăл ĕçе тума сана хушас шухăшăм пур

ман, хам та тумалла... Вӑхӑт ҫук ман, Ҍава, хӑвах пӗлетӗн?

**Ҍава.** Йурӗ, Кришкӑ. Хам пӗлнӗ таран тӑнлантарса парӑп, вӑл ӗҫ ытла йӑвӑр ӗҫех мар аламӗн. (*Аннапа Микуҫ рапфакран хаҍ ҫеҫ тавӑннӑскерсем кӗреҫҫӗ*).

2.

**Кришкӑ** (*савӑнса*). А-а-а! пирӗн сутйантсӑсем!!! (*аллисене хыттӑн ҭӑмӑртаҫҫӗ*). Тавай саланӑр, ну сирӗн ҫӗр ҫинҍе мӗнле новӑҫсем?..

**Анна.** Уҫӑлмалла сирӗн пата килсе курас терӗмӗр.

**Микуҫ.** Вӑхӑтлӑха сире пулӑшма килтӗмӗр, Кришкӑ!..

**Кришкӑ.** Аван, аван!.. Ну кӑсем карӗҫ ӗнтӗ, текех пирӗн ҫине ҫавӑрӑнса пӑхмаҫҫӗ тесе, шухӑшласа пурӑнаттӑм! Есӗр сапҫем вырӑсланса кайнӑ, мур аҍисем!..

**Анна.** Ан мӑшкӑлаха ес, Кришкӑ, ҫыннисем как нипуҭ вӗренсе колхоса усӑллӑ пуласшӑн тӑрӑшаҫҫӗ...

**Ҍава.** Мӑшкӑласан, йулташсем, ҫук, есӗр йалтан кайнӑранпа самайах ҫивӗҍленнӗ... (*кулаҫҫӗ*). Пӑкотиха, епӗр те ӗҫсене тирпейлесе ҫитерсен Кришкӑпа иккӗн тӳрех Мускава вӗҫтерӗпӗр!.. Ун ҍухне вара есӗр пире пӑхӑр та курӑр, хамӑр акроном пулса тавӑрнатпӑр! Пирӗнпе шӳт тума хӗнтерех! (*Кулаҫҫӗ*).

**Микуҫ.** Епӗр вӗренсе пӗтерсе, вӑхӑтлӑха сирӗн вырӑнта ӗҫлӗпӗр, есӗр вӗренӗр, ҫапла ӗҫ тухаҭ вӗт?

**Кришкӑ.** Калама ҫук аван шухӑш!.. Парӑр аллусене, йулташсем! (*алӑ параҫҫӗ*). Ку пирӗн хушӑмӑрта токӑвӑр пултӑр... Йурати?..

**Аннапа Микуҫ.** Йураҭ, йураҭ!.. Епӗр вӗренме кайиҍҍенех ун ҫинҍен шухӑшланӑ.

**Кришкӑ** (*сасартӑк*). Астуман та!.. Каҫарӑр, йулташсем, ман кӑнҍелерте васкавлӑ ӗҫ, курӑр, есӗ, Ҍава, еп каланине ан манха!.. (*тухса кайаҭ*).

АССР
Ч.

**Анна.** Курса йăлăхтарăпăр та...

**Микуҫ.** Иртнĕ пурнăҫра темĕн тĕрлĕ хурлăх курнă пулин те, Кришкă парăнмасť, вăл ҫамрăк, унăн куҫĕсем вут пек ҫунаççĕ! Кирек хăҫан та савăнăҫлă, вăл киҫемлине курман епĕ. Ăна ĕç савăнтарать, мĕн ҫухлĕ нумайтарах ĕçленĕ, вăл ҫавăн ҫухлĕ савăнăҫлăрах.

**Лҫава.** Унтан епĕ хам та тĕлĕнетĕп... вăл пулас мар тăк, епĕ тахçанах пуҫа усса халсăрланмалла!.. ăна курсассăнах ман хамăн та вăй кĕрсе кайать!.. Ĕçлес килет!.. (*Анна пуҫне ҭикее шухăшлать*).

**Микуҫ.** Ĕçĕ çăмăл мар, ответлă ĕç, вăл ҫапах ăна ҫирĕп ҫулйĕрпе йертсе пырать. Хаҫатра та пирĕн колхос ҫинҫен ырласа ҫыраççĕ. Пĕркун Кришкă сăнне кĕртсеҫҫĕ. Савăнтăмăр епĕр...

**Лҫава.** Кришкăран пример илсе вĕренмелĕх пур. Вĕрениссине те вĕренет ĕнтĕ... Кăшт вăхăт пулсанах, ун аллинҫе кĕнеке-хаҫат. Хĕрсемпе ҫӳресе вăхăта иртерес вырăнне, ҫĕрĕ-ҫĕрĕпе хут вулать. Мĕн-мĕн вуланине веҫех каласа кăтартать вара. Каланă ҫухне, ун сăмаххисенҫен хĕм пĕрĕхсе тухать тейĕн, ҫулăмланать вăл...

**Микуҫ.** Пирĕн пек шкулта вĕренес пулсан вăл, халăха тĕлĕнтерĕ...

**Лҫава.** Анна, ес лар, епĕр Микуҫпа иккĕн выҫăх килкартине кайса килер. Кашни харпăрхăй вырăнĕнҫе пултăр, атту екскурсантсем килсе кĕрĕç. Веç унта ҫĕнĕ хаҫатсем пур, пăхкала. Епĕр нумайах тăмăпăр.

**Анна** (*пуҫне ҫĕклесе*). А-а? Йурĕ, йурĕ, кайса килĕрах!..

**Микуҫ.** Ан тунсăхла? (*алăкран тухса кайнă ҭухне Анна ҫине ҫавăрăнса пăхса кулса тухса кайать*).

**Анна** (*пĕҭҭен*). Ăнланман епĕ... Кришкă ҫăнахах та аван каҫҫă. Вăл пĕртте ыттисем пек мар, хăйне хăй нихăҫан та асла хумасť. Кирек хăҫан та кăмăллă, йăваш... Микуҫах ун пек мар, кирек хăҫан та мăн кăмăллăрах,

çынна курсан пăхтарасшăн тăрăшать. Рапфака кайаҫҫен туйманҫҫĕ еп ăна, йурататтăм... Хаҫ йерипенех унтан сивĕнсе пыма пуçларăм, темĕн килĕшмест, хам та лайăххăн ăнланаймастăп?.. Ах, Кришкă! Кришкă! Йурататăп еп сана, йурататăп!.. Пĕлесҫĕ сан, пĕлесҫĕ, Кришкă?.. Ман ҫĕремсĕм йепле вĕри йуратуллă çулăмпа çуннине... анҫах темшĕн, есĕ ман çине пăхмастăн, ман вутпа çулăмланаакан куçăмсене темшĕн асăрхамастăн. Кришкă!.. Кришкă!.. (*шухăша кайать. Кришкă пырса кĕрет*).

3.

**Кришкă.** Анна!.. есĕ пĕҫҫенехçке...

**Анна** (*пăлханса*). Пĕҫҫенех, Лҫавапа Микуç вылҫăх килкартине пăхма тухрĕç...

**Кришкă.** Телейлĕ мăшăр есĕр, Анна, иксĕр те ăслă вĕреннĕ çынсем пулатăр ĕнтĕ. Йуратса, ĕçлесе пурăнма тата авантарах! Кĕвĕçтереттĕр есĕр... Сирĕн телейлĕ пурнăçăр çине пăхатăп та епĕ, савăнатăп. Хăшпĕр ҫухне вара ман хамăн та сирĕн пек телейлĕ пулас килет. Анҫах епĕ хаҫ те телейсĕр мар, Анна, ман савни—колхос, епĕ ăна ҫунтан ҫĕререн йурататăп! Хĕрӳллĕ ĕçре епĕ пĕтĕм ҫунхавалĕпе çĕкленсе кайса таçта çитеҫҫен вĕçсе кайма хатĕр! Аван мариха? Тăвăллă кĕрешӳ иртнĕ хыççăн колхос ӳсĕмне вăйлантарса пырса, ун тĕреклĕхне пăхса канма! Авăн çапмалли, тырă вырмалли, утă çулмалли машшинсем, кашни харпăр хăй вăхăтĕнҫе уйрăм кĕвĕ кĕвĕлеççĕ.. Вăл машшинсене пăхатăп та епĕ, вĕсен кашнин ҫĕри пур пек туйăнать! Вылҫăх-ҫĕрлĕхсем, пионерсем, пурте йуратса пирĕн ушкăна аҫашланăн туйăнать. Сар ылттăн уйхир, ҫеҫеклĕ улăхсем, епĕр тĕреклентсе пынине кăтартмаççĕи, Анна?

**Анна.** Çук, Кришкă!.. епĕ санпа танаштарсан етем мар, Кришкă! Есĕ кулленхи ĕçре, ĕç вуҫахĕн сăпки çинҫе

йаранатан. Санан ђёрў, санан йун тымарёсем колхос ёçёпе, унан пурнаçёпе пёрлен картлатса тапаççё. Сан пек çынна пурнаçра пёрремёш хут куратап епё... Ђан ђан çёнё пурнаçшан çитёнсе çитнё ес, епё..

**Кришка**. Анна!.. мёншён есё мана çапла калатан- Епё колхоса савни выранне хурса йуратнинђен куласшан мари ес? Çук, йуратататап... Ун çинђен çитё, Анна, епё Љавапа Микуçа тупса килем, ёç пурђђё, каçар, сана кирлё мар самахсем каласа тунсахлаттартам пулё? (*тухса кайат, Анна вал тухса кайсанах хыçалтан алак патне ђупса пырат*).

**Анна.** Кришка!. Кришка!.. (*кайалла çаваранса сётел хушшине пырса ларат*). Каçар мана, Кришка, каçар! Епё сан çавтери пысак ђысла йуратуна хам мёскён ђёремри йалкашса çунакан йуратупа улаштарасшан пултам. Сан йурату—пурнаçпа вёресе, палкаса таракан йурату... (*пуçне ђикет. Верук пёђђенех кёрет*).

4.

**Анна** (*карт сиксе*). Вер-ук! (*ђупса пырса ыталат*).

**Верук.** Анна килнё терёç те, хыпалансах ђупса килтём. Курманни нумай пулат те, Анна, курас килекен пулђё сана.

**Анна.** Ах, Верук!

**Верук.** Анна, мён пулна сана? есё вёри; сан шамшаккусем ђётреççё?!

**Анна.** Нимён те мар, Верук, епё ахаљ...

**Верук.** Çук, ёненместёп, Анна, есё манран темскер пытаратан? Кала, Анна, кала, тен, епё сана пулашма пултарап?.. Епё санран ку таранђђен нимён те пытарман. Ваççа вилсен есё мана хаван йулташла аллуна парса лаплантаратан.

**Анна.** Ну, йурё еппин, Верук, калам, ах, Верук...

(*Љава, Кришка, Микуç кёреççё*).

5.

**Микуç.** Анна! итлеха, Анна, епĕр кайнăранпа мĕнешкел çитĕнӳ.. 25 ĕне, 50 сурăх, 15 сысна, пурте ăратлă, куçпа пăхсан ытарма çук, ах илемлĕçке. Вĕсене пăхса усрама уйрăм килкарти, кĕнеке çинђе çырнă пек. Вĕсене нормăпа тăрантарса усратпăр, тет Лђава. Машшинсем те, пайан тесен, пайан акă уйа тухмалла, йăлтăртатса çеç тăраççĕ...

**Кришкă.** Ытлашши ан мухта, Микуç, у-у-у! пирĕн тумалли малта татах та пуçламан кĕтес.

**Анна.** Кришкă, есĕ йаланах хăвна мухтанине йуратмастăн, çавăн ђухлĕ пысăк, ђыслă ĕç тусан та мухтамасан.

**Кришкă.** Еп пĕђђен туман вĕт, ушкăнпа.

*(Виçĕ хрестђен, тата икĕ картђăк кĕреççĕ. Картђăксем кĕрсенех сăхсăхаççĕ. Ленин патретне асăрхаса ђарăнаççĕ, пурте куласран шăлĕсене çыртса тăраççĕ).*

6.

**Кришкă.** А-а-а, килĕр, килĕр, иртсе ларăр, тăвансем! Килекен хăнасене йышăнма йаланах хатĕр *(ал параççĕ).*

**Карђăк.** Алăк патĕнђе те йурĕçке, урисем çавнашкал пирĕн...

**2-мĕш кар** *(картђăка айакран тĕртсе).* Пăхха, пăх, çав мĕн шуйттан кăкри вăл... Епĕр ура çинђе те тăркалăпăрçке!.. *(айакран леш картђăкне тĕртсе Ленин пат. кăтартат).*

**1-мĕш хр.** Пирĕн çамрăксем аптратрĕç, колектив та колектив, ара хамăр куçпах килсе курас терĕмĕрçке...

**Кришкă.** Курмасăр, ара, курас пулат... ак килкартине тухса вылђăх ђĕрлĕхсене, машшинсене, çуртйĕрсене курăпăр. Хамăрăн пур пеккине кăтартăпăр, çуккине кăтартайрас çук ĕнтĕ...

**Анна.** Килкелесе çӳрес пулаť, пĕр-пĕрин ĕçне курса вĕренсен авантарах пулакан.

**2-мĕш кар.** (*картђăка тĕртсе*). Пăхха, пăх майри те ђăваш пекех калаçаť. (*Аннана*). Çавăнпа çав, çавăнпа килсе курас терĕмĕр...

**2-мĕш хр.** Снаш, епĕ те сирĕн пек шухăшлă çын, йурататăп сирĕн пеккисене... Сăмахпа суйана çаптарма маçтăр есĕр. Çыпăçтармаллах çыпăçтараççĕ вара. Ман хамăн та пĕр шăркалђĕ пур. Сирĕн пекех, кăсамул вăл. Сăмаххипе пĕлĕт çине лартса йараť ĕнтĕ. Ĕç тăвас мĕн пулсан, ман шăркалђă çук та... Таçта!..

**3-мĕш хр.** Лапăртататăн çав кирлĕ мара, пурте санăн пекех пуљ, асту!..

**2-мĕш хр.** А-а-а, çук! Епĕ пурне те каламастăп, хам пирки кăсамул çеç терĕмçке. Ăнлантарса пар, кăтартса.

**Кришкă.** Љђава, вĕсене ăнлантарса пар, кăтартса çӳре, епĕ кайса хам ĕçе туса пĕтерем, (*çамрăксене*) есĕр калаç-каласа ларăр, (*хрестђенсене*) есĕр Љђавапа тухса çӳрĕр, кайран апатланăпăр. (*Хрестђенсем Љђавапа тухса кайма хатĕр, алăка çитсенех сасартăк ратио шăхăрса йарса калаçма пуçлать, Кришкă итлемесĕрех тухса кайать. Картђăксем кăрт сиксе кайалла çавăрăнса тăраççĕ. Калаçакан çынна тупаймасăр ратио какри çине пăхса çăварĕсене карса итлеççĕ*).

**Карђăк** (*пăшăлтатса айакран 2-мĕш картђăка тĕртсе*). Тур çырлахтăрах мана, пăхха, калаçассине те темле ђĕлхепе калаçаť...

**2-мĕш кар.** Çав тăрпапа калаçса таçтине те пĕлеççĕ тет вĕсем. Вĕсен тырпулĕ, ай, турă хăвађĕпе пулаť тетĕн есĕ. Тăрпа етем пек калаçни çĕр çуралнăранпа пулман йапала!.. ара, ухмах, леш антихрис пуђха вăл, атту пулсан куçа курăнмалла.

**Карђăк** (*пăшăлтатса*). Ах, турă, турă, каçарсам мана çылăхлă çынна.

**2-мĕш кар.** Итлеха, ђип-ђиперех кăмунис терĕ!

**Ратио.** Всесоюзная Ком. П. (б)...

**Хресђен** (*Љавана*). Çакиха ĕнтĕ вăл сирĕн ратио текенни?..

**Љава.** Çакă. Хаљ ак Мускавран калаçаççĕ. Ун тăрăх вырăсла ђухлакан çынсене ђылай вĕрентме пулаť. Тырпул акса тăвасси, выљăх-ђĕрлĕх ĕрђетесси т. ыт. çинђен те вĕреннĕ çынсем, акрономсем калаççĕ...

**2-мĕш карђ.** Илтетни мĕн калаť вăл? Мускавран, тет.

**Карђăк.** Вĕсем каланине нумайтарах итлеха ес, вĕсем калĕç сана.

**2-мĕш карђ.** Пулĕ те, самани, ара самани çавнашкал хаљ.

**Карђăк.** Хăť те мĕн каласан та Мускавран тăрпапа калаçнине ĕненместĕп епĕ.

**Љава.** Есĕр, кинемейсем, мĕн çăварсене карса пăрахнă, ай ĕненместĕр?..

**Карђăксем** (*хăраса*). Ай, тур çырлахтăрах! Мĕнле ĕненес мар, ĕненетпĕр ара, ĕненмесĕр... Мускавран, Мускавранах калаçаççĕ... (*иккĕн пăшăлтатса*), асту ĕненетпĕр, кĕтсех тăр, антихриса ĕненме епĕр турра тĕппипех манманха... тур çырлахтăрах...

**Љава.** Кайран итлĕпĕр, хаљ тухса курса çӳрер...

**Карђăксем.** Айтăр, айтăр, курса çӳрер... (*тухса кайаççĕ. Вĕсем тухса кайсанах Микуç, Верук кулаççĕ, Анна шухăшра*).

**Микуç** (*Аннана асăрхаса*). Анна! мĕн пулнă сана? Мĕн есĕ тунсăхласа ларатăн?

**Анна.** Нимех те çук, Микуç, ман темскер... пуç ыратаť.

**Верук.** Еп килсе кĕрсенех Анна пуçне ђиксе ларађђĕ...

**Микуç.** Уçăлса çӳрес пулаŤ, Анна?

**Анна.** Микуç, тархасшăн ан калаç есĕ манпа!.. Есĕ мана пĕртте шеллеместĕн, ман пуç çурăлса тухаŤ, есĕ çапах калаçтаратăн!.. Çынна кăшт та канăç памалла марши вара? Верук! ан çиллен, пырса ларăп, ман санпа калаçмалли питĕ нумай...

**Микуç.** Пĕђђен хăварма ыйтатăн пулсан... Епĕр Верукпа кайăпăр, Верук! айта?!..

**Верук.** Анна, епĕ сана тăнлантăм... Айта, Микуç! (*Анна çине пăхса тухса кайаççĕ*).

**Анна** (*пĕтђтђен*). Кирек те мĕн ту мана, Кришкă, епĕ сана йуратататăп!.. ах, мĕскĕн ђĕре... Ђĕре... (*Кришкă хăвăрт тђупса кĕрет, ун аллинтђе хут*).

7.

**Кришкă.** Йулташсем!.. (*Аннаран пуçне никам çуккине курса*). Анна! Анна... Ну ĕнтĕ малашне пирĕнпе калаçма хĕнтерех пулаŤ, епĕр хамăр хуçалăха тӳнтерле тавăрса лартсан та хресђенсем пирĕнтен мăшкăлаймĕç! Пĕлетни, Анна, пĕлетни трактăр!!! Ак итле! (*вулать*). „Телеграмма. Высылаем трактор. Тракторный завод. Васильев“ Ну, ку сана мĕнле пек туйăнаŤ, Анна?

**Анна** (*тђупса пырса Кришкăна хыттăн ыталаса тытса*). Ак мĕнле пек туйăнаŤ, Кришкă!.. Есĕ трактăра йуратнинђен те ытларах йуратататăп епĕ сана!.. Йуратататăп, Кришкă, йуратататăп!.. (*уртăнса тăрать*).

**Кришкă** (*атђашласа*). Анна!.. есĕ ђылайранпах ман кăмăла килетĕн, анђах епĕ сана йуратнине темĕнрен те вăйлă ђуна хаваслантаракан ĕç йуххинђе маннă. Тунмастăп, Анна! колхоса трактăр килесси маншăн калама çук пысăк савăнăç! Çав савăнăç мана çĕклентерсе йанă вăхăтра, есĕ мана хăвăн йулташлă, çывăх йулташлă аллуна тăсса патăн. Епĕ вара татах та ытларах, çӳлерех

çĕклентĕм!.. Ман вăйхалăм, йухса пĕтми çăлкуç пек пăлкаса тăрат! Анна! епĕ санпа пĕрле, çывăх йуратнă йулташпа татах та вăйлăланса пырса, ĕçри йăвăрлăхсене савăтри пысăк машшинсем пысăк тимĕрсене авнă пек çĕнтерсе пыма пултарăп!

**Анна.** Кришкă! есĕ хăвăн çулăмланакан сăмаххусемпе мана тыткăна илтĕн! Манăн та санăн пекех колхоса машшинсене, выђăх-ђĕрлĕхе, уйхире, улăха, йухан шывсене ђунтан йуратма вĕренес килет... Ман веçех санпа хутшăнса кайса, сан шухăшпа, сан çулăмланакан ђĕрӳпе пурăнас килет!.. Кришкă, епĕ сана йурататăп, есĕ те мана хăвăн пек, ĕçе йуратма вĕрент?..

**Кришкă.** Вĕрен, Анна, вĕрен!.. (*ыталаса илет*).

*Ђаршав.*

# III-мĕш пайĕ.

## 2-мĕш карттин

**Стсенă.** Урам. Клуп умĕнђе. Суха патне тухмалли вăхăт. Çĕр типсен. Хĕвел хĕртсе пăхат. Клупа трактăр колхосра мĕнле вырăн йышăнса тăнине кăтартакан лосăнксемпе илемлетнĕ. Илемлетнĕ трипунă.

1.

(*Ик-виçĕ колхоçнĕк трипунăна илемлетсе пĕтерсе тухса кайаççĕ. Ђылайран пĕр ушкăн атђапăтђа, пионерсем тђупси кĕреççĕ те трипунăна пăхса тĕлĕнеççĕ*).

2.

**Çапук** (*уксахлат*). Петта, Петта! Пăхха, йепле илемлетсе пĕтернĕ!

**Петта.** Айтаха, Çапук, хăпарса тăрса пăхатпăр (*хăпараççĕ*).

**Ађасем** (*сиккелеççĕ*). Ех!.. трахтăр! трахтăр, трахтăр, трахтăр, трах!..

**Çапук** (*трипунă çинђен*). Йулташсем, итлĕр, йулташсем!.. Пайанхи кун... пайанхи кун... кун... (*ађасем ахăлтатса кулаççĕ*).

**Петĭа.** Çитĕнсе çитсен епĕр, Çапук, иксĕмĕр те çакăнта хăпарса тăрса калама пуçлăпăрха.

**Ађасем** (*пĕр-пĕрин çине ђупса пырса*). Кайăр, кайăр унтан!.. трактăр пыраĭ!.. таптаĭ, таптаĭ!.. (*пурте кулаççĕ*).

**Çапук.** Еп ун ђухне кулаксемпе мĕнле кĕрешни çинђен каласа кăтартатăп...

**Петĭа.** Епĕ колхос туни çинђен!.. (*çав вăхăтра айакра пионерсен рошок сасси илтĕнет. Ађасем пурте сиккелесе ђупса тухса кайаççĕ. Кайнă ђухне*).

**Ађасем.** Ех трахтăр, трахтăр, трахтăр трах!.. трахтăр, трахтăр, трахтăр трах!.. (*сассисем инçетре илтĕнеççĕ*).

3.

**Крахйан** (*Крахйан, Кулине тата икĕ картђăк кĕреççĕ*). Кулине, пăхха, йепле хăтланаççĕ пирĕн çамрăксем, (*лосăнка хыпашласа*) саттин, ђип-ђипер саттинахçке ку?..

**Кулине.** Ђăнах та саттинахçке, ех кунтан саппан çĕлесе тăхăнсан мĕнле пулĕши!..

**Крахйан.** Трахтăра хирĕç тухса илме хатĕрленеççĕ терĕ, çавăнпа хатĕрленĕ пуљха кăна, ара пăйахамсен Микуçĕ савăтран йаратпăр тетђĕ, йанă ëнтĕ.

**1-мĕш карђ.** (*2-мĕш картђ. айăкран тĕртсе*). Трахтăр калама çук аслă çыншим вăл?..

**2-мĕш карђ.** Асли пулмалла çав, çавăнпа хатĕрленнĕ ëнтĕ, ахаљ пулсан çакнашкал хатĕрленес çук вĕсем!..

**Крахйан** (*Кулинене*). Ара, ухмах, трахтăрпа пĕтĕм колхос уйне пĕр çын пĕр кунта сухаласа пĕтерме пултараĭ, тет.

**Кулине.** Пирĕн клупран та пысăккă пулмалла вăл?..

**Крахйан.** Ара, пысăккă пулмасăр, ухмах, пирĕн клуп пек анђахи вăл?..

**1-мĕш кар.** (*Крахйана*). Трахтăр калама çук ђаплă тумланнăскер пулмалла?..

**2-мĕш карђ.** (*Крахйана пўлсе*). Ара, çавăн ђул ђаплă çын та ђаплă тумланмасан...

**Крахйан** (*Кулинене кулаççĕ*). Ђисти ухмахах çав есĕр!.. Ара трахтăр çын мар вĕт вăл, вăл ак çак клупран та темĕн ђухлĕ пысăкрах плукă!.. Ун çине хăпарса ларсах сухаламалла, тет...

**1-мĕш карђ.** Мĕн сĕпĕлтететĕн, Крахйан, плукă пулсан хирĕç тухса илеççĕи?..

**Кулине.** Ёненместĕр пулсан Кришкăран ыйтăр хăт те... Суха сухаламаллийех тет çав...

**2-мĕш карђ.** Ун пек пысăк плука çирĕм лаша кўлсен те турттарийас çук, есĕр унпа суха сухаласшăн...

**Крахйан.** Лашасăрах ђупат тет вăл... (*халăх йерипен пухăнма пуçлать. Катђђăсем, хĕрсем праçникле тумланнă. Вĕсем хушшинђе Верукпа Анна, Йăкăнат та пур*). Вакун пек, тата хăй шутсăр вăйлă тет!..

**2-мĕш карђ.** Апла пулсан анасем çине ăçта пынă ђукун çул сармалла пулаť. Сухаланă ђухне сар, акнă ђухне пуçтар, ĕç нумай... (*çывăхра итлесе тăракансем пурте ахăлтатса кулаççĕ. Ыттисем картђăксем патне пухăнаççĕ. Аннапа Верук айакра*).

4.

**Верук.** Анна, епĕр иксĕмĕр çак вырăнта тăнине нихăçан та манас çук епĕ...

**Анна.** Вăл вăхăт саншăн çеç мар, пĕтĕм колхосшăн ĕмĕрлĕхе асра йулĕ. Ваççана нихçан та, никам та маңас çук... Ун çинђен пирĕн ађасем те калаçĕç.

**Верук.** Йулашки хут, çак клупран мусăкпа илсе тухса карĕç... Ваççан хупăннă куçĕсем, сивĕннĕ кĕлетки халĕ те куç умĕнђех, Анна!..

**Анна.** Итлеха, Верук, (*вăтаннă пек пулса*) епĕр Кришкăпа... Епĕр Кришкăпа туслашсах карăмăр... Вăл колхоçнĕксем хушшинђе, колхос йатне улăштарса Ваçça йађĕпе хурасси çинђен сăмах çӳренине илтрĕм тет... „Колхос им. Мартынова В." йепле, авани?..

**Верук.** Еп савни пулнăшăн мар, Анна, ман шухăшпа Ваçça ђăн-ђăнах çав йата илтме тивĕçлĕ...

**Анна.** Пайан трактăра хирĕç тухса илмелли уйав, епĕ трипунă çине хам та ухса тăрса каласшăн ун çинђен...

**Верук.** Маншăн пулсан ку питĕ пысăк парне пулаť. Анна!..

**Анна.** Йурĕ, никама та систерместпĕр ун çинђен... (*тепĕр ушкăнра хресђенсемпе картђăксем*).

**Хресђен.** Анасем çинђе ђукун çул сарасшăн! ха-ха-ха-ха! (*каллех пурте кулаççĕ*).

**2-мĕш карђ.** Мĕн кулмалли пур унта? Крахйан вакун пек терĕ те (*пурте каллех кулаççĕ*).

**Анна**. Верук, айтаха çавсем патне, темскер ахăраççĕ.. (*ушкăн патне пырса тăраççĕ. Çав вăхăтра тепĕр ушкăн хресђенсем, атђапăтђасем кĕреççĕ*).

**Йăкăнаť.** Пăхăрха, пăхăр!.. йут йалсем те пирĕн трахтăр уйавне курма килнĕ!.. (*пурте çавăрăнса пăхаççĕ. Йут йалсем айакра тăраççĕ*).

**Крахйан**. Мĕн сурăх кĕтӳ пек капланса тăтăр, килĕр кунтарах! (*йут йалсем пыраççĕ, хăшпĕрисем ал тытаççĕ. Çав вăхăтра пионер отретђĕ параппан çеммипе пыни илтĕнет, ђылайран çитсе кĕреççĕ. Комантăпа трипунă умĕнђе ђарăнса тăраççĕ*).

**Крахйан.** Ах, шăркăљђăсем! Кулине, Кулине (*айакран тĕртет*), пĕсехисене пăхха, пăх!

**Кулине.** Ан кансĕрлеха!.. куратăпçке..

**Крахйан** (*2-мĕш картђăка тĕртсе*). Пĕсехисене куратни?!

**2-мĕш карђ.** А-уй! Пирĕн Микишка та унтаçке, турçырлахтăрах, (*кăшкăрса*) Микишка, Микишк-у-у!..

**Крахйан.** Ан кăшкăр, ухмах, ай тытса кайасран хăрамастăн?!.. (*2-мĕш картђăк ђарăнат*).

**2-мĕш карђ.** Аçа çаптăрах ку ађапăђана...

**Крахйан.** Ан шарл-л-а-у!.. (*Кришкă, Ђава, Уçăп тата Микуç, ытти сем 2-мĕш старик, колхоçнĕксем кĕреççĕ. Цурте шăпланаççĕ. Кришкă, Ђава, Уçăп тата Микуç трипунă çине ухса тăраççĕ*).

5.

**Кришкă.** Пионер-сем! ĕçхалăхĕн ĕçĕсемшĕн кĕрешме хатĕр пулăр!

**Пионерсем** (*пĕр сасăпа*). Йаланах хатĕр!.. (*халăхсем хаваслăхпа шавлаççĕ*).

**Кришкă.** Йулташсем!.. трактăра кĕтсе илмелли миттĕнка уçăлнă шутлатăп (*Интернатсионал йурлаççĕ*). Тепĕр аллă пилĕк минутран пирĕн умма, пирĕн йал нихăçан курман хурçă ут—трактăр кĕрлесе килсе тăрĕ. Трактăр вăл ушкăнлă хуçалăхшăн нимĕнрен те хаклă машшин!.. Унăн хăвађĕ çеç пирĕн авалран сухапуçĕ хыççăн утса курпунланса хытса ларнă çурăмсене тӳрлетме пултарĕ!.. Трактăр йалхуçалăхне çĕнĕрен, ырми хурçă вăй парнелесси пуриншĕн те паллă, çавна кура пайанхи куна уйавлатпăр та епĕр!.. Пайанхи кун пирĕн уйхир пĕрремĕш хут трактăрăн йанравлă сассине илтет. Трактăр пĕтĕм Совет Сойусĕнђи уйхире хупласа илесси—пирĕн малаллăх. Шухăшлăрха, йулташсем, çак çитĕну мари? Çак йалхуçалăхĕ сотсиалисăм çулĕ çине йарса пуснине кăтартмасти?! (*ал çупаççĕ*). Çитĕнӳ, пысăк çитĕнӳ, йулташсем!.. Сывă пултăр трактăрлă колхос!.. Сывă пултăр колхос йухăмне çирĕп çулпа йертсе пыракан ком. парттийĕ!.. (*ал çупаççĕ, интернатсионал*).

**Ђава.** Епĕ хам та пĕрикĕ сăмах калаймасар ђатаймастăп, йулташсем!.. Колхос сăмахне калама ђăнах та çăмăл, анђах ăна туса пĕтерсе пайанхи куна çитеђђен çакнашкал çитĕнўсемпе халăх умне кăларса тăратма хĕн. Йалти тĕттĕмлĕхпе, колхос йухăмне пур йенђен те ђăрмантарса, путарса лартма тăрăшакан клас тăшманĕпе—кулаксемпе кĕрешекен ывăнми, хастарлă паттăрсене ђысласах килет ман. Акă вĕсем, сирĕн умăрта (*Кришкăна, Уçăпа, Микуçа тата Çапука ђĕнсе хăпартса кăтартат*).

**Халăх.** Ур-ра! Ур-ра!!! (*Интернатсионал*).

**Ђава.** Йулташсем! Пирĕн ĕретрен çак ĕçшĕн кĕрешнĕ тапхăрта пирĕншĕн ђи хаклă, хастарлă йулташ комсомолĕс Марттынăв Ваççили тухса карĕ! Ăна кулаксем пĕтерђĕç. Ун йатне пуç хатĕрĕсене хывса ђыслама ыйтатăп (*пурте пуçсене ђиксе тăраççĕ. Пытару маршĕ*). Ваçça пирĕнпе пĕрле йалхуçалăхне ушкăнлатассишĕн патракпа ђухăнсен пурнăçне лайăхлатассишĕн, хăйĕн çамрăк вăйне хурса, хăйне хăй шеллемесĕр ĕçлерĕ. Анђах вăл пайанхи куна çитеђђен курăнса, пирĕнпе пĕрле трактăра кĕтсе илеймерĕ! Йулташсем!.. Ваçça пирĕн патран карĕ пулин те, епĕрунăн ĕçне тата çинерех тăрса тума тытăнса, пайанхи куна илсе çитертĕмĕр. Малашне те йăвăрлăхсем пулмĕç тесе каласшăн мар еп вĕсем куç умĕнђе, анђах есĕр пулăшса пынипе епĕр пурĕ пĕрле вăл йăвăрлăхсене çĕнтерĕпĕр!.. Ур-ра!..

**Халăх.** Ур-ра!.. Ур-ра!.. Ур-ра!.. (*Çав вăхăтрах рапођђи пырса кĕрсе трипунă çине ухат*).

**Рапођђи** (*вăл трипунă çине тухнă-тухманах вĕçихĕрисĕр урра кăшкăрнă сасă илтĕнет. Лăплансан*). Епĕ ораттăр мар, йулташсем, кĕскен, рапођђилле калатăп. Пирĕн трактăр савăтĕнђе ĕçлекен рапођђисем сирĕн колхоса çак трактăра парса йанипе пĕр танах 20 пин рапођђи йађĕпе хĕрўллĕ пролеттарла салам калама хушрĕç (*ал*

*çупса урра кăшкăраççĕ*). Пайантан пуçласа пирĕнпе сирĕн хушăра таҫăран та таҫă çыхăну пулассине шансах тăратăп епĕ. Сывă пултăр пире йертсе пыракан комуниссен партти! Урра! (*Урра кăшкăраççĕ*).

**Анна** (*трипунă çине ҫупса пырса тухат те*). Йулташсем!., ман хамăр колхос йатне улăштарса В. Марттынăв йатне парас шухăш пур! (*ал çупаççĕ*).

**Кришкă.** Анна каланипе килĕшекенсем пурте ал тăратăр (*пурте тăратаççĕ*). Йарăр! (*Интернатсионал йурлаççĕ*). Миттĕнка хупăннă шутлатпăр! Кунта тăраканнисем пурте трактăра хирĕç тухса илме кайаççĕ (*Темонстратси мусăкпа тухса кайат. Стсенă çинҫе Крахйан, Кулине, Йăкăнат тата 2-мĕш старик йулаççĕ. Мусăк сасси инçетре йерипен илтĕнет*).

**Йăкăнат.** Епĕр ват çынсем кунта çитсен те курăпăрха...

**Крахйан.** Килĕха, мĕнваскамалли пур...

**Кулине.** Çакнашкал халăх пухăнса калаçнă хыççăн епĕ хам та темскер улшăнсах карăм. Те çамрăклантăм вара, шăмшак çăмăлланҫĕ...

**Йăкăнат.** Епĕр ҫухнехи мар çав, вĕсем тупăкри вилнĕ çынна та ҫĕртсе кăларĕç. Ех, çамрăксем, çамрăксем! Пирĕн ват пуçа вилеҫҫен кăтартса хăвартăр ĕнтĕ.

**Крахйан.** Каккуй епĕр ҫухнехи те, ку...

**Кулине.** Кам шухăшланă ĕнтĕ çакна курасса!..

**Йăкăнат.** Ăн-та! (*пуçне пăркалат*). Каккуй шухăшлама та, тĕлленмен...

**Кулине.** Саççем пуçа çавăрса йаҫĕç. Шухăшлап, шухăшлатăп та, çавсем тĕрĕс калаçаççĕ вĕсем...

**Йăкăнат.** А-й! Кулине!. Неушлĕ ес ку таранҫҫен вĕсем тĕрĕссине пĕлмен?

**Кулине.** Пĕлмен сана асту?.. (*Пĕр ушкăн атҫапăтҫа ҫупса тухса иртсе кайаççĕ*).

**Йăкăнат.** Пĕлнĕ пулсан унашкал калаçмастăн та, пĕлмен çав (*кулат*).

**Крахйан.** Çитĕ ĕнтĕ сире пĕр-пĕрне кăшлама!.. Унсăр пуçне сăмах тупайман!.. (*Аннапа Верук ђупса пырса клупа кĕрсе кайаççĕ. Унтан ик авăрлă йалав çĕклесе тухса ваттисене*).

6.

**Анна.** Есĕр кунта мĕн туса тăраттăр, айтăр хăвăртрах!..

**Йăкăнат.** Кунта çитсен те курăпăр терĕмĕр те... (*Ваттисене пырса çавăтаççĕ*).

**Анна.** Айтăр, айтăр!.. (*Сĕтĕрсе кайаççĕ*).

**Крахйан.** Çамрăксем темерĕн çав... Ытла хăвăрт ан ђуптарăрха тархасшăн, ват шăмшакка çĕмĕрсе пĕтерĕр!.. (*тухса кайаççĕ. Кăшт тăрсан Ерхип тусĕсем иккĕн калаçса кĕреççĕ*).

7.

**Çĕпиркка.** Хаљ тин шанмалли çук ĕнтĕ, вĕсем вăйлăлансах пыраççĕ...

**Çилвестăр.** Епĕ хам та ним калама аптратăп... çулла вăрçă тухассине çеç кĕтмелли йулђĕ...

**Çĕпиркка.** Халăхĕ те... веçех вĕсем майлă çаврăнса ўкнĕ... куратни веç-ă, мĕн хăтланаççĕ вĕсем?.. çитменне йут йалсем те килнĕçке...

**Çилвестăр.** Шарламалли çук, Çĕпиркка, хамăра та Ерхипе вĕлернĕ пек патлаттарса хурĕç...

**Çĕпиркка.** Итлеха, ман шухăшпа ак мĕн тумалла. Трактăрне пăсма йăвăрах мар, пĕр-пĕр винттине кăларса илсен, вĕсем трактăрпа мухтанни те ахалех пулаť. Кунти тимĕрçсем йусаймаççĕ, савăта çырса йамалла пулаť... Савăтран кайалла хатĕрне йарађђен тепĕр сывлăш... вăл вăхăтра халăха хамăр майлă çавăрма та ĕлкĕрĕпĕр.

**Çилвестăр.** Ăс çитет сан, Çĕпиркка!.. йусасан каллех пăсма пулаť... пĕрте пĕр лексен?

**Çĕпиркка.** Çилвестăр, ĕçне тăвађђенех сехрӳ хăпса тухаťçке сан! Кашкăртан хăрасан, вăрмана та ан çӳре теççĕ... Тытăнастăк тытăнас, пурпĕр вĕсем пире ђĕрĕллех тупăка хуса кӳртеççĕ! Мĕн пăркаланса тăмалли пур унта?

**Çилвестăр.** Астуха, çавсем кунталла килеççĕ вĕт... Епĕ сана килĕшсех те кайăп... айта пăрăнар? (*тухса кайаççĕ. Ваӊккă кутамкка çакнă вырăс тумтирĕне, унпа пĕрле тепĕр хрестђен пырса кĕреççĕ*). .

8.

**Ваӊккă.** Çапла вара, мана нумай хупса усрамарĕç. Тĕрмерен тӳрех сывалмалли вырăна ăсатрĕç. Унта пурăнса епĕ çителĕклĕ маттурлантăм.

**Хресђен.** Неушлĕ, Ваӊккă, есĕ малашне ĕçмесĕрех пурăнма пултаратăн?

**Ваӊккă.** Каккуй ĕçме те, тĕсне курас килмест... Итлеха, епĕ хаљ ĕнтĕ колхоçнĕксенђен пĕрт те кайа йулас çук. Кĕнекесене вулама тишкеретĕп... Ĕçкĕ сийенĕ çинђен халăх çинђе токлат туса пама та пултаратăп пулмалла... Ĕçкĕшĕн хам пуçа çухатмастăп ĕнтĕ... Ĕлĕк ухмах, ытла ухмах пулнă çав епĕ... Ерхип ман мăй çинђе утланса ђупнă пулин те, епĕ ун йăвăрăшне туйман. Хаљ пырса çыпçăнха ман пата, пĕлетпĕр епĕр пуйанпа ђухăн хушшине мĕнле йытă кĕрсе выртнине...

**Хресђен.** Тĕлĕнтеретĕн ес мана, Ваӊккă, есĕ хам умра тăратăн, ак еп сан çине пăхатăп та... Тĕлĕнетĕп, сапçемех улшăннă есĕ!.. а?!.

**Ваӊккă.** Епĕ текех урамра ӳсĕрпе йăваланса çӳрекен çĕтĕк-çатăк Ваӊккă мар ĕнтĕ... Çĕнĕ пурнăçа виттĕр куракан Ваӊккă!.. Колхоса илђђĕр тољккă мана, епĕ Ваӊккă мĕнле ĕçлеме пултарнине кăтартăттăмђђĕ...

**Хресҫен.** Телей сан, Ваҫккă... Уйав тума ĕлкĕртĕн...

**Ваҫккă.** Мĕнле уйав?

**Хресҫен.** Ес пĕлместĕнтеи?.. Ник. Ваçлейҫҫă ĕçлекен савăтри ĕçлекенсем пирĕн колхоса трактăр илсе панă. Кĕçех килмелле, пĕтĕм халăх уйхапхинҫе. Курмастăним йепле илемлетсе пĕтернĕ...

**Ваҫккă.** Ма паçăрах каламарăн ес мана?!. Ну курăпăр (*хыпăнса тҫупса тухса кайат*).

**Хресҫен.** Тĕлĕнмелле самани, самани майĕпе улшăнат хăт... Ара, ку, ку Ваҫккă... Ӯ-ху!.. Хамăн та кайса курас пуљ хăйамат! (*Тухса кайат, айакран трактăр сасси çывхарса пыни, мусăк сасси илтĕнет. Халăхсем клуп умне сике-сике тухаççĕ. Трактăр сасси çывхарса çитсе стсенă хыçĕнтҫе тҫарăнат*).

**Аҫасем** (*сиккелеççĕ*). Ех, трактăр, трактăр, трактăр трах!.. трахтăр, трах!..

**Аҫасенҫен пĕри.** Пăхăрха, пăхăр, аҫасем!.. Кришкăпа Çапук... трахтăр çине утланса ларнă!!!

*Вĕçĕ.*

Цена 42 коп.

Алагер В. СИЛА

Драма в 3 частях, в 6 картинах

Чувашское Государственное Издательство

Чебоксары — 1931